К 76
С 12
Ч-36469

Г. Савельев

# Утатпăр пурнăç çулĕпе

ЭЛĔК — 1998

Национальная библиотека ЧР
4-036469

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 76
С 12

Геннадий САВЕЛЬЕВ

# Утатпӑр пурнӑҫ ҫулӗпе

*Пичет ветеранӗсен асаилӗвӗсем, историпе краеведени очеркӗсем*

ЭЛӖК — 1998

К 76.113 + К 76.125.1

*Элĕк райхаçат редакцийĕпе районти типографи пурнăç çулĕпе юнашар утма пуçланăранпа 65 çул çитнине халаллатăп.*

*Автор*



**Редакция Аликовской районной газеты была создана в начале августа 1932 года, а районная типография стала действовать с 20 октября 1933 года. С тех пор, как видно, минуло 65 лет!**

**В этой небольшой книжечке рассказывается об истории создания и пройденном пути двух коллективов.**

**Документально-исторический сборник рассчитан на широкий круг читателей.**

4-36469

ПРОВЕРЕНО
2010

Национальная библиотека Чувашской Республики

# УМСĂМАХ

Çĕр çинче çӳрекен кашни çын лайăх пурăнма, нумай пĕлме ĕмĕтленет. Анчах та пурте хăв шухăшлана пек пулмасть çав. Мĕншĕн тесен, этемĕн âс-тăнĕпе вăй-халĕ, таланчĕпе тавракурăмĕ, пултарулăхĕпе чăтăмлăхĕ пĕрешкел мар. Çапах та эпир пурте хамăр йăх тымарĕсене тата çуралса ӳснĕ ялпа тăван тавралăх историне пĕлме тивĕçлĕ.

Çирĕм çул ытла райхаçатăн штатра тăман сотрудникĕ пулнипе пĕлсен, чылайранпа тăван тавралăх историйĕпе тĕплĕн интересленнине кура, республикăри краеведсен Союзĕн председателĕ Виталий Петрович Никитин (Станьял) тата Чăвашсен обществăпа культура центрĕн руководителĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн председателĕ Михаил Николаевич Юхма юлташсем мана хам çуралса ӳснĕ Мăн Ямаш ял историйĕ çинчен пĕчĕк произведени çырса пама ыйтнăччĕ. Аслă та âслă юлташсен ырă сĕнĕвĕсене шута илсе çийĕнчех ĕçе пикентĕм. Виçĕ çул каярах Элĕк район типографийĕ манăн тĕпчев ĕçĕсене «Ямаш— тĕне кĕмен чăваш» ятпа ятарлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ.

Пурнăç çулĕпе малалла утнă май, кăçалхи сентябрь уйăхĕнче манăн каллех Чăваш республикинчи патшалăх тĕп архивĕпе кĕнеке палатинче виçĕ кун лармалла пулчĕ. Хальхинче эпĕ унта Элĕк районĕнче тухса тăракан «Пурнăç çулĕпе» хаçат редакторĕн ĕçĕсене туса пыракан Юрий Леонидович Корниловпа районти типографи директорĕ Фаина Федоровна Константинова юлташсен кăмăлĕсене тивĕçтерес шутпа лекрĕм. Кĕскен каласан, вĕсем районта типографи хăçан йĕркеленсе кайни тата вăл ку таранччен мĕнле аталанса пыни çинчен тĕплĕнрех пĕлесшĕн пулчĕç.

Калас пулать, редакцире упранакан приказсен пĕрремĕш кĕнеки çирĕплетнĕ тăрăх, районти типографие 1933-мĕш çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче Чăвашполиграфтрестăн октябрĕн 16-мĕшĕнчи 48-мĕш приказне тĕпе хурса уçнă. Ăна вара унччен пĕр çул маларах Вăрнарта пичетлесе пынă «Колхоз хаçачĕ» валлиех туса панă. Çавăнтанпах редакципе типографи пĕр-пĕринчен ниçта та уйрăлман.

ку таранччерех пĕр çуртра пурâнаççĕ, килĕштерсе ĕçлеççĕ, халăх ыйтăвне туллин тивĕçтерсе пыма тăрăшаççĕ. Кун çинчен «Колхоз хаçачĕ», «Ленин çулĕпе», «Пурнăç çулĕпе» (район хаçачĕн ячĕ çапла улшăнса пынă) хаçатсен редакцийĕнче чылай çул ĕçленĕ Хирлеппуçĕнчи Михаилпа Аркадий Григорьевич Кустиковсен тата Вутланти Александр Николаевич Мешков (1920—1993) хăйсен асаилĕвĕсемпе çирĕплетеççĕ.

Кĕнекери сăнÿкерчĕксене çемье архивĕнчен те илнĕ, Сергей Тимофеев фотограф та ÿкернĕ. Алçырăвĕсене СССР географи обществин действительнăй членĕ, Элĕкри литературăпа краеведени музейĕн директорĕ, ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Гурий Константинович Терентьев учитель рецензиленĕ.

Архивсенчи истори докуменчĕсемпе тата редакцири приказсен кĕнекисемпе усă курса хатĕрленĕ пĕчĕк кĕнекене «Утатпăр пурнăç çулĕпе» тесе ят патăм. Вăл пурне те интереслентересся тата тĕпчев ĕçĕсенче пысăк пулăшу парасса шанас килет.

*Геннадий САВЕЛЬЕВ,*
*Хисеплĕ краевед, журналистсен тата писательсен Союзĕсен членĕ.*

# Часах ҫитетпĕр утмăла...



Ҫакна эпĕ хам пирки каламастăп. Эпир, вăтăрмĕш ҫулсенчи ҫамрăк корреспондентсем, тахҫанах утмăлтан иртнĕ ĕнтĕ, кĕҫех ҫитмĕле те ҫитетпĕр. Кунта эпĕ районти «Ленин ҫулĕпе» хаҫатăн 60 ҫулхи юбилейĕ ҫывхарса килнĕ май пуҫа килнĕ шухăшсене каласа парасшăн.

Темшĕн-ҫке тутарсен поэчĕн Габдулла Тукайăн пĕр сăввинчи икĕ йĕрки халĕ те манăн пуҫран тухма пĕлмест.

Ватăлатăп эп те.
Вăхăт иртнĕҫем
Ҫурăм курпунланĕ,
пĕрĕнĕҫ питсем...

тесе ҫырнăччĕ вăл унта.

Ҫапла, ватăлсах пыратпăр. Хаҫатра ĕҫленĕ юлташсенчен хăшпĕрисем вилсе те пĕтрĕҫ. Эпĕ лайăх пĕлекенсенчен, акă, Тавăтра пурăннă Иван Тихонович Тихонов виҫĕмҫул ҫĕре кĕчĕ. Вăл чылай вăхăт хаҫат редакторĕ пулнă. Унпа пĕрле секретарьте ĕҫленĕ Фома Филиппов та (Урмай ялĕнчен), ун хыҫҫăн редакци секретарĕ пулнă Василий Быков та (Качалав) Тăван ҫĕршывăн аслă вăрҫинче пуҫĕсене хунă. Тата ытти нумай-нумай юлташсен шăписем паллă мар.

Анчах «Ленин ҫулĕпе» хаҫат ватăлма шутламасть-ха, пачах урăхла, ҫамрăкланса пырать. Вăрҫă хыҫҫăнхи ҫулсенчипе танлаштарсан, вăл формипе те, содержанийĕпе те чылай лайăхланчĕ, илемлĕрех тухма тытăнчĕ. Алăпа наборланă пирки унăн страницисем таса мар ҫапăннă пулсан, материалсене линотиппа наборлама тытăннă хыҫ-

ҫăн тасарах тухма пуҫларĕ. Хаҫатăн калăпăшĕ те ӳсрĕ. Малтан икĕ страницăллă кăна пулнă, халĕ вара 4 страницăллă тухса тăрать.

Тата ăна малтанхи пек эрнере икĕ хутчен мар, виҫĕ хутчен кăлараҫҫĕ. Ҫавăнпа хаҫата халăх кăмăллама пуҫларĕ, ăна кашни килтех ҫырăнса илме тăрăшаҫҫĕ. Вăрҫă хыҫҫăнхи ҫулсенче унăн тиражĕ 4 пин экземпляртан иртмен пулсан, кăҫал 5218 экземпляр сарăлчĕ.

Тертлĕ пулнă «Колхоз хаҫачĕн» кунҫулĕ. Пирĕн хаҫат 1965 ҫулхи апрельччен ҫав ятпа тухса тăнă. Элĕк районне ҫĕнĕрен туса хунă хыҫҫăн ăна хальхи ята панă.

Редакципе типографин малтанах йĕркеллĕ ҫурт та пулман. Эпĕ астăвасса вĕсем кивĕ чиркӳ ҫумне тĕксе тунă пысăках мар ҫуртра вырнаҫнăччĕ. Чиркĕвĕ автостанцирен инҫех мар лартса тухнă ҫăкасен речĕпе юнашар ларатчĕ. Унтах районти ҫыхăну кантурĕ ĕҫленĕ. Эпĕ хам хаҫат малтанхи кунсенче мĕнле тухнине астусах каймастăп, район центрне те килсех кайман. Пирĕн ялта ун чухне пуҫламăш шкул кăна пулнă пирки эпĕ Элĕке 5-мĕш класа ҫӳреме тытăнсан тин редакци ăҫтине пĕлтĕм, унта кĕрсе пĕчĕк заметкăсем парса хăвараттăм.

Район хаҫачĕ тухма пуҫланă вăхăтра ҫыхăну кантурĕн начальникĕнче ĕҫленĕ, Элĕк ҫынни Семен Иванович Каньков унăн историне лайăх пĕлет.

Хаҫатăн малтанхи редакторĕ Синер ҫынни Тимофей Яковлевич Золотов пулнă.

Типографи директорĕнче (ҫавăн пек каламан пулĕ-ха ун чухне, тен, аслă наборщик шутланнă) Качалав ҫынни Никифор Зубровский ĕҫленĕ. Малтанхи номере майĕпенмайĕпен наборласа, калăпласа ҫитернĕ, анчах пичетлемелли машина пулман. Ирĕксĕрех Вăрнара кайса ҫапса килмелле пулнă. Тем вăхăт ҫаплан нуша курма тивнĕ. Юрать-ха ун чухне хаҫатне хальхин чĕрĕкĕ пысăкăш ҫеҫ кăларса тăнă.

Т. Я. Золотов хыҫҫăн хаҫат редакторĕнче Пелагея Сергеевна Меценатова ĕҫлерĕ. Вăл пирĕн район ҫынни марччĕ, ăҫтан пулнине те ыйтса пĕлмен.

7—8-мĕш классенче вĕреннĕ чухне эпĕ редакципе ҫыхăнах туслашса ҫитрĕм. Ҫав ҫулсенче хаҫат редакторĕ Тавăт ял ҫынни Иван Тихонович Тихоновчĕ. Секретарьте шĕмшешсем Михаил Иванович Иванов ĕҫлетчĕ.

Халĕ Шупашкарта пурăнать. Хутла лайăх пĕлекен çын пулнâ вăл. Ун çинчен Иван Тихонович яланах ырâпа аса илетчĕ.

Редакцире пĕр вâхâтра Максим Ястран поэт та ĕçлерĕ. Вăл Вутлан ял Советне кĕрекен Вăрманкас ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тâван çĕршывăн аслâ вâрçинче паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ.

Çакна халĕ те лайâх астâватâп: «Колхоз хаçатĕнче» унâн «Çуркунне» ятлă сăвви пичетленсе тухнăччĕ, унти кашни сăмахĕ «ç» саспаллинчен пуçланатчĕ. Çавна май питĕ янравлâ вулапать сăвви.

Типографине хаçат çапмалли машина та илсе килнĕччĕ ĕнтĕ, çыннисем ĕçлеме вĕренсе çитнĕччĕ. Редакципе типографи тен. малашне йĕркеллех пурâнса кайнâ пулĕччĕç. Анчах кĕтмен çĕртен тепĕр инкек сиксе тухнâ—çиппине йĕппинчен туртса кăларчĕç. Çыхăну каптурне сарма вырăн кирлĕ тесе типографине килен-каянсем валли тупнâ çурта уйâрса кăларнâ. Анчах унта редакци валли вырâн тупâнман иккен. Хâна çурчĕ хальхи КБО вырăнĕнче ларатчĕ. Ун чухне секретарьте ĕçленĕ Федор Евграфович Ванин вара кивĕ чиркӳрен хăна çурчĕ патне куп касипе мĕн чухлĕ хутланă пулĕ. Юлашкинчен, тарâхса çитнипе, «Пуçпа е чĕркуççине» ятлă фельетон пичетлесе кăларчĕ. Унта вăл çавâн пек âссăр решени йышăннăшăн райĕçтâвком руководителĕсене хытах пĕçертнĕччĕ. Çакăн хыççăн Ф. Ванина ĕçрен кâларса янă. И. Т. Тихонова редактортан секретаре куçарнâ. Кâштах Ф. Ванин çинчен. Унччен маларах вăл хăйне фронта яма ыйтса çар комиссариатне заявлени панă пулнă, унâн çырâвĕ хаçатра та пичетленсе тухнâччĕ. Çакâн хыççăн ăна салтака илнĕ те фронта âсатнă. Унтан таврăнайман.

Федор Евграфович поэт-сатирик пулнă. Унăн «Юптарусем» ятлâ пĕчĕк кĕнеке пичетленсе тухнâ.

Хаçатăн кунçулĕ тертлĕ пулнâ тенĕрен çакна та каласа хâвармалла: хальхи çурта куçиччен автовокзалта та «пурăнса» пâхрĕ вăл. Çунса кайиччен çав çурт икĕ хутлă пулнă. Кĕрсен сулахай енчен аялти пысâк пӳлĕмре типографи вырнаçнâччĕ, ун синчи пӳлĕмре эпир, редакци сотрудникĕсем, хĕвĕшеттĕмĕр. Пĕр пĕчĕк пӳлĕмре 4 çыннăн сĕтелĕсем тĕкĕнсе ларатчĕç, чуспа пӳлсе тунâ тата пĕчĕкрех пӳлĕмре редакторпа унăн заместителĕ хаçата

валли материалсем хатĕрлетчĕç. Çынсем пекех пурăнас тесе шкаф та, диван та туяннâччĕ. Çапла вара пĕр-пĕрне тĕртĕнмесĕр те иртсе çӳрейместĕмĕр. Çапах та хаçата йĕркеллех кăларса пынă.

Пĕр вăхâт çакâн пек тертленсе пурâннă хыççâн редакципе типографи халĕ эпир ĕçлекен çурта куçрĕç. Çав вăхâтра типографи çурчĕ кâначчĕ. Унта та редакци валли пĕр пӳлĕм тупăнчĕ, ĕçлекенĕсем вара паянхи чухлех пулнâ. Çавна май хăшпĕрисем вырâн пушанасса кĕтсе те тâркалатчĕç.

Тâвăр пулсан та нихăшĕ те кâмăлсăр пулман. Анчах çĕнĕ çуртра нумаях пурâнса пĕтерейменрĕмĕр. Районсене пысăклатнâ май пирĕн района пĕтерсе хучĕç. 1963 çулхи май уйâхĕнче пирĕн «Колхоз хаçачĕ» тухма пâрахрĕ. Эпир вара Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата илсе тăма пуçларâмăр. 1965 çулхи апрельтен район хаçачĕ çĕнĕрен тухма пуçларĕ.

Вăрçâн малтанхи çулĕсенче редакторта Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Урикасси ял çынни Семен Филиппович Саперкин, унтан Харитон Иванович Лисин (Ехремкасси) ĕçленĕ. Каярахпа Александр Николаевич Мешковпа (Вутлан) Аркадий Григорьевич Кустиков (Хирлеппуç) чылай вăхâт редакторсем пулнâ.

Чартакри Илья Петрович Петров та, Хĕрлĕ Чутайри Иван Алексеевич Чирков, Муркаш районĕнчи Актайри Петр Никифорович Соловьев та пĕр вăхăт редакторта ĕçлесе курнâ.

Пирĕн хаçат редакцийĕнче талантлă çынсем сахал мар ĕçленĕ. Шел, вĕсем хăйсен пултарулâхне вĕçне çитиех кâтартаймарĕç.

Çапах та хâшпĕрисем хăйсен âсталâхне ӳстерсе паллă çынсемех пулса тâчĕç. Акâ, ялхуçалăх пайĕн сотрудникĕ пулнâ Иван Михайлов (Тушкасси) — Шупашкар районĕнчи «Тăван ен» хаçат редакторĕн заместителĕ, хаçат корреспондентĕнче ĕçленĕ Петр Иванович Волков (Мâн Этмен) — Чăвашрадион аслă редакторĕ.

Юлашкинчен çакна пăшâрханса палăртас килет: пирĕн редакци коллективĕ ватâлса çитрĕ. Темпĕн-çке вăтам шкул пĕтерекенсем журналист специальноçне суйласа илесшĕн мар. Чâнах та, ку ĕç çăмâлах мар, апла пулин те чâваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен шкул ачи-

сене журналистикăпа ытларах интереслентермелле. Пĕр вâхăтра ку енĕпе Шĕмшешри вâтам шкулта лайâх ĕçлетчĕç. Владимир Петров, хâй активлâ ялкор пулнă май, ачасене те хаçата çырма вĕрентетчĕ. Ахальтен мар кунтан палла çыравçăсемех тухрĕç.

Лайăх хаçат вĕçне çитиччен вуланать. Эпир ăна пурне те кâмăла каймалла тăрăн шухăшлâ, интереслĕ тăвасшăн. Анчах редакци коллективĕ тâрăшни кâна çителĕксĕр. Çавâнпа та пичете юратакансене пурне те пире активлă пулâшса пыма чĕнетпĕр.

*М. КУСТИКОВ,*
*обществăпа политика пурнăç пайĕн корреспонденчĕ,*
*«Ленин çулĕпе» хаçат. 1992-мĕш çулхи июлĕн 23-мĕшĕ.*

# Мухтавлă хаçатăмăр



Вăрçă хыççăн парти райкомĕсенче çар пайĕсене пĕтернĕ май, ĕçсĕрех тăрса юлтăм, темелле. Эпĕ унăн заведующийĕ пулнăччĕ. Еçĕ уп чухне нумайччĕ-ха, учителе кайма та пулатчĕ, культура фронтĕнче те çынсем кирлĕччĕ.

Пĕррехинче район хаçачĕн редакторĕ И. Т. Тихонов тĕл пулчĕ те:

— Сана курасшăнччĕ-ха. Редакцин ответлă секретарĕ çук. Пыр çав вырăна — терĕ.

Ун-кун шухăшласа пăхрăм та килĕшес терĕм. Ку калаçу 1949 çулхи декабрьте пулса иртрĕ.

Хаçат ĕçне эпĕ пĕлсех каймастăп, мĕнле çыраççĕ унта,

мĕнле пичетлеççĕ — курман. Сăвâсем çыркалана̂-ха. «Хатĕр пул» журналта та, «Çамрăк хресчен» хаçатра та пичетленкеленĕ. Анчах хаçат ĕçĕн йĕркине пĕлмен.

Çапла ĕçлеме пуçларâм хаçатра. Иван Тихонович хаçат сыннинчен çирĕп ыйтатчĕ, йăнâш тăвасран хытâ асăрхаттаратчĕ.

— Чи кирли — тимлĕх. Тимлĕх татах та тимлĕх, — тетчĕ.

Калâпăр, хаçатра орфографи е грамматика йăнăшĕ кайсан, «тимлĕх» «сартиртах» юлнă», тетчĕ. Ай-яй лайăх марччĕ — хâвна хăв ирĕксĕрех чи хаяр сâмахсемпе вâрçатâн. Материалсенче тĕрĕсмарлâх каясран пушшех хытă асăрхаттаратчĕ. Ятлатчĕ хытâ. Анчах тĕрĕс ятлатчĕ. Нимĕн те калаймâн. Пĕр çулталăка яхăн ĕçлесен, хăнăхрăм, темелле.

Пĕррехинче парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Григорий Иванович Иванов мана хăй патне чĕнтерчĕ.

— Хаçат ĕçĕ мĕнле, килĕшет-и? — терĕ.

— Халĕ хăнâхрâм теме юрать ĕнтĕ. Иван Тихоновича тав тăватăп, — терĕм.

— Хам та сисетĕп-ха, хăнăхатăн. Эпир сана партипе совет шкулне вĕренме ярасшăн. Мĕнле шухăшлатăн кун пирки? — хуша хучĕ.

Çапла эпĕ партипе совет шкулĕн вĕренекенĕ пулса тăтăм. 1951 çулхи апрельте парти обкомĕн бюровĕнче (вĕренÿ вĕçлениччен) район хаçачĕн редакторне çирĕплетрĕç.

Ун чухне «Колхоз хаçачĕ» эрнере пĕрре хальхи хаçатăн çурри пысăкăш кăна тухатчĕ. Çавăнпа штатра редакторпа секретарь, счетовод çеç пулнă.

...1957 çулта мана каллех редактора лартрĕç. Çав çул вара «Колхоз хаçачĕ» хальхи форматпа эрнере виççĕ тухма тытăнчĕ. А. Кустиков партин аслă шкулĕнчен вĕренсе килсен, редактора ăна çирĕплетрĕç. Çавăн чухне редакципе типографи çуртне туса лартрăмăр.

Н. С. Хрущев вăхăтĕнче районсене пĕрлештерсе пысăклатрĕç, пирĕн Элĕк районĕ пĕтрĕ. Вăрнар районĕ туса хучĕç, район хаçачĕ тухма пăрахрĕ. Кадрсем тĕрлĕ çĕре саланса пĕтрĕç. Эпир М. Кустиковпа Вăрнар район хаçатĕнче ĕçлеме пуçларăмăр. А. Кустиков Етĕрнере редактор пулса тăчĕ. Типографин пĕр пайне Вăрнара турт-

тарчӗҫ. Шупашкартан хушнипе вӗр-ҫӗнӗ хаҫат пичетлемелли машинӑсене кувалтӑсемпе ҫапса аркатрӑмӑр. Сӗтел-пукансене сутса пӗтерчӗҫ, архива тахҫантанпа тирпейлесе ҫӗлесе пынӑ подшивкӑсене Вӑрнара илсе кайрӗҫ те пӗтрӗҫ пулмалла.

1964 ҫулта Л. И. Брежнев КПСС Генеральнӑй секретарьне ларсан, районсене ҫӗнӗрен туса хучӗҫ те каллех район хаҫачӗ кирлӗ пулчӗ. Ун чухне эпӗ райӗҫтӑвком секретарӗн ӗҫӗсене туса пыраттӑм. А. Кустикова Етӗрнерен чӗпсе илчӗҫ те редактора лартрӗҫ, эпӗ унӑн заместителӗ пулса тӑтӑм.

Хаҫат ятне улӑштарас терӗмӗр. «Ленин ҫулӗпе» ят хума калаҫса татӑлтӑмӑр. Обкомра ҫакӑнпа килӗшрӗҫ, кун пек ят урӑх ҫук терӗҫ. Ҫапла вара 1965 ҫулхи апрелӗн 4-мӗшӗнче каллех район хаҫачӗ тухма пуҫларӗ.

Ҫакӑ интереслӗ тата кӑмӑла ҫӗклет: района туса хурсанах райӗҫтӑвкомпа парти райкомне ҫырусем килме пуҫларӗҫ. Унта чылайӑшӗ хаҫат ячӗ пирки кӑсӑкланни сисӗнчӗ. Хӑшӗсем «Ҫӗнӗ пурнӑҫ», «Тӗрӗслӗх», «Ял пурнӑҫӗ», «Ленин ялавӗ» тата ытти ятсем пама сӗнчӗҫ. Кӑмӑл чӑнах та ҫӗкленетчӗ, мӗншӗн тесен район ҫыннисем хӑйсен хаҫатне юратаҫҫӗ иккен, унӑн ырӑ ячӗшӗн тӑрӑшни уҫҫӑнах курӑнатчӗ.

Малтанхи вӑхӑтра Элӗкре типографи пулман пирки кашни номерех Вӑрнарта пичетлеттӗмӗр. Редакцин унта икӗ корректор тата секретарь ӗҫлесе пурӑнатчӗҫ. Ҫав материалсене вӗсене кӗртсе паратчӗҫ. Сайра-хутра материалсене кӗртсе паманни те, ҫухални те пулнӑ. Ун пек чухне хӑвӑрт мерӑсем йышӑннӑ, хаҫат тухмасӑр тӑман.

Ҫавӑнпа типографи тӑвас ыйту ҫивӗч тӑратчӗ. Тепӗр виҫӗ уйӑхран ҫакна пурнӑҫлама май килчӗ. Хальхи типографи ҫуртне Госбанк уйрӑмӗ йышӑннӑччӗ. Вӑл унтан каяссшӑн пулмарӗ. Ҫапах хӑйӗн малтанхи ҫуртне кайма тиврӗ.

Типографи уҫӑлсан вара ӗҫ кӑштах ҫӑмӑлланчӗ. Пӗр пӳлӗмне редакци вырнаҫрӗ. Анчах питӗ тӑвӑрччӗ, пӗр пӳлӗмре 4—5 сӗтел ларатчӗ, пӗр телефон. Ҫавӑнпа хушма ҫурт лартса редакци валли вырӑн пысӑклатас ыйту тухса тӑчӗ. Ӑна эпир 1968 ҫулта пурнӑҫларӑмӑр, кашни пай валли уйрӑм пӳлӗм, уйрӑм телефон пулчӗ. Тухӑҫлӑ ӗҫлеме, пӗрле пухӑнса канашлама условисем лайӑхланчӗҫ.

Кадрсен ăсталăхĕпе пултарулăхĕ нумай ӳсрĕ. И. Михайлов, Я. Сигаев, М. Кустиков, Н. Курцов пысăк квалификациллĕ, тарăн шухăшлă материалсем хатĕрлетчĕç. Вĕсене хатĕрлеме редакцин автомашина пулни калама çук нумай пулăшрĕ.

Авторсен коллективĕ анлăланчĕ. Ялкорсем йышлăн çырса тăратчĕç. Агрономсем, зоотехниксем, учительсемпе ытти специалистсем нумай çыратчĕç. Чылай колхозниксем хăйсене кӳрентерсен-тусан редакцирен пулăшу ыйтатчĕç.

Çăхавсем те сахал мар килетчĕç. Вĕсене тĕрĕслемесĕр хаçатра пичетлеме çук. Çавăнпа та тĕрлĕ учреждениесене ярса панă. Халĕ те вăл йĕрке çаплах пулма кирлĕ.

Йăнăшсем те пулнă, тепĕр чухне сынна шаннипе, ĕненнипе те, хăвăн тивĕçӳ çине çиелтен пăхнипе те, пĕлӳ çитейменнипе те йăнăшсем тунă, тĕрĕсмарлăхсем хаçата кайнă. Ун пек чухне айăплинчен хытă ыйтнă, халĕ те çавах ĕнтĕ вăл, йăнăш ятăн — ответ тыт.

Эпĕ редакцире 30 çула яхăн ĕçлерĕм. Кун чухлĕ ĕçлекен никамах та пулман-ха. Анчах ĕçне юратнă, чунчĕрепе парăнса тӳрĕ кăмăлпа туса пынă. Манăн халĕ те районта паллана, пĕлнĕ çынсем çĕршер. Вĕсемпе нумай калаçнă, шухăшланă, канашланă, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илнĕ. Кирек хăш яла пырсан та вĕсем мĕн çинчен те пулин интереслине пĕлтеретчĕç. Кĕçĕн Тăван тăрăхĕнчи А. Деведеров, А. Егоров. А, Тарасов, Ф. Зайцев, Чăваш Сурăмĕнчи К. Воронов, И. Степанов, тата ытти нумай-нумай авторсем район хаçачĕн чăн-чăн тусĕсем пулса тăчĕç. А. Орлов, А. Мясников, Н. Андреев. Г. Пласкин, А. Павлов, Г. Белов, В. Порфирьев, Н. Ларионов тата ытти вуншар ялкор паян кун та хаçатăн чи активлă, чи пархатарлă ĕçченĕсем шутланаççĕ.

Хаçатăмăр — 60 çулта — пенсие тухмалли вăхăт темелле Анчах вăл çамрăк-ха, çирĕп вăй-халлă, пуриншĕн те хаклă. Эпир ăна чи малтан алла тытатпăр, ун тăрăх район пурнăçне виçетпĕр, çĕннине пĕлетпĕр. Çавăнпа вăл ватăлмасть, авторсемпе редакци сотрудникĕсем ăна ватăлма памĕç. Хаçатăмăр малалла çирĕп утăмсемпе кайĕ.

*А. МЕШКОВ.*

*Вутлан ялĕ.*

*«Ленин çулĕпе», 1992-мĕш çулхи августăн 4-мĕшĕ.*

# Йывăрлăхра вăй илнĕ



Тем те курма тиврĕ пурнăçра. Ачалăхăм тăван колхозра иртрĕ. Çамрăклăх вара — Совет Çарĕнче. Çичĕ çул службăра тăтăм. Хаяр вăрçă синкерĕсене Япони самурайĕсене çапса аркатнă çĕрте тӳссе ирттертĕм.

1950 çул вĕçĕнче тăван яла таврăнтăм. Кăнтăрла колхозра тĕрлĕ çĕрте пулнă, каçсерен вăхăта клубра ирттернĕ.

Яланлăх валли мĕнле ĕç суйласа илмелле-ши? Çакă мана вăл вăхăтра канăç паманах ĕнтĕ. Халĕ, аса илсен, кулăшла та пек. Пĕррехинче яла кино кăтартма килчĕç. Икĕ каç пуçтарăнсан та ăна кураймарăмăр. Е мотор ĕçлемест, е аппарат çĕмĕрĕлсе ларать. Çакăн çинчен «Чăваш коммуни» хаçата «Пĕли-пĕлми ĕçе тытăнсан» ятпа статья çырса ятăм. Хыççăнах вăл пичетленсе тухрĕ. Тепĕр ик-виç кунтан мана парти райкомĕн секретарĕ чĕнсе янă. Хăра-хăра кĕрсе тăтăм кабинета. Ну лекет ĕнтĕ халĕ, ăçтан çырни пулчĕ пĕрех май, тетĕп. Секретарь калаçăва аякран пуçларĕ. «Эсир-и-ха вăл хаçата çыраканни?» терĕ. Пытармарăм, авторĕ эпĕ пулни çинчен пĕлтертĕм. Çав вăхăтрах хăрани-мĕнĕпе хӳтĕленме пуçларăм. Вăл «Эсир тĕрĕсех тунă, çитменлĕхсемпе кĕрешмелле», терĕ. Унтан мана ку çынран çыравçă пулать тесе-ши, район хаçатĕнче ĕçлесе пăхма сĕнчĕ (хаçат редакторĕ ун чухне парти обкомĕн курсĕнче вĕренетчĕ). Эпĕ килĕшрĕм. Çапла, 1951 çулхи апрель уйăхĕнче «Колхоз хаçачĕн» ответлă секретарĕ пулса тăтăм.

1962 çул вĕçĕнче районсене пĕрлештерсе пысăклатасси çинчен ытларах та ытларах калаçма пуçларĕç. Эпĕ ун чухне райкомăн иккĕмĕш секретарĕнче ĕçлеттĕм. Пĕчĕкрех районсене пĕтерсех хуманччĕ-ха ун чухне. Çак пăт-

ранчâк тапхâрта мана парти обкомĕ йышăннипе, «малашлâх» çук районтан Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай тата Мâн Сĕнтĕр районĕсем хушшинче тухса тâма тытâнакан хаçат редакторĕ пулса ĕçлеме ячĕç. Каярахпа, ку районсем пĕтнĕ хыççăн, виçĕ çула яхăн Етĕрне район хаçатĕнче вăй хутăм.

Пысăклатнâ районсем хâйсене лайăх енчен кâтартсах каймарĕç пулас. Вĕсем промышленность предприятийĕсен, колхозсемпе совхозсен ĕçне-хĕлне тивĕçлĕ витĕм кӳреймерĕç, халâхпа тытакан çыхăну вâйсăрланчĕ. Çавâнпа та 1965 çул пуçламăшĕнче малтан пĕтернĕ районсене каллех çĕнĕрен йĕркелерĕç.

Мана хамâр патра ĕçлеме чĕнсе илчĕç. Парти райкомĕн пропагандâпа агитаци пайĕн пуçлăхĕнче târâшма пуçларăм. Пĕр-икĕ уйăхран парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Л. П. Понятнов хăй патне чĕнсе илчĕ.

— Акă мĕн, — терĕ вâл, кăштах шухăша путса. — Хаçатсăр района ертсе пыма та, халâхпа калаçма те йывâр. Çавâнпа та апрель уйâхĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа район хаçатне кâларма тытăнмалла. Сире хаçат редакторĕ пулма çирĕплететпĕр...

Чăн та, кун пек сĕнӳ пуласса эпĕ малтанах кăшт сиснĕччĕ. Анчах ĕç-пуç кун пек хâвăртлâхпа çаврăнса тухасса кĕтмен те.

Шутласан, çӳçĕм вирелле târать, пуçâм çаврâнса каять. Ларса ĕçлеме çурчĕ те, сĕтел-пуканĕ те çук. Чăн та, малтанлăха пире парти райкомĕн çуртĕнче пĕр пӳлĕм пачĕç.

Хаçата йĕркеллĕ вулакансен кâмâлне каймалла кâларса târма журналистсем кирлĕ. Ăçта-ха вĕсем? Унччен редакцинче вăй хунâ çыравçăсем тĕрлĕ çĕре саланса пĕтнĕ. Кирлĕ çынсене вĕсем хушшинче шырама пуçларâм.

Малтан райхаçат редакторĕн çумĕ пулнă Александр Мешков райĕçтăвком секретарĕнче ĕçлетчĕ. Унпа курнăçса калаçрăм.

— Çĕнĕ ĕçе тин çеç хăнâхса пыма пуçларâм, вырâнтан-вырâна куçса çӳрессĕм çуках, — терĕ вăл, пат татса. Мĕнле-ха капла, эпĕ ăна шаннâччĕ вĕт. Темиçе хутчен те ӳкĕтлесе калаçнâ хыççăн килĕшрĕ хайхи.

Хирлеппуçĕнчи Михаил Кустиков, Якунекассинчи Николай Курцов, Етĕрне районĕнчи Мăн Явâшри Нико-

лай Пахомов çыравçăсем хаваслансах ĕçе кӳлĕнчĕç. Çыраслâхĕпе палâрсах кайман çамрâксене ĕçе илсе пăхкаланâ, анчах пултарулăх çуккине пула вĕсем пирĕн патра нумаях тытăнса тâраймастчĕç.

Район хаçатне малтанхи çур çула яхâн Вâрнарти типографире наборласа пичетлеме йышăнтăмâр. Çавâнпа та ответлă секретаре, корректора, машинисткâна унтан тупма тиврĕ. Вâрнарти райхаçатра ĕçлекен Владимир Кузьмин ответлâ секретарь пулма кăмăлларĕ.

Халĕ ĕнтĕ тĕп çыравçăсене тупса çитертĕм, ĕç вырâнĕсемне тивĕçтертĕм. Анчах ума тепĕр пâтâрмах тухса тăчĕ: алçырăвĕсене епле майпа Вâрнара çитермелле-ха? Редакцин çăмâл автомашина çук. Пулсан та кашни статьяна корреспонденцишĕн âна унта хăвалаймâн. Çавăнпа та хаçат сотрудникĕ çырса пĕтернĕ статьяри черпил типсе çитиччен райком çурчĕ çумĕпе иртекен мăн çул хĕррине тухса чупатчĕ. Вâрнара каякан автомашина водительне çырăва типографие кĕртсе пама тархаслатчĕ. Тавтапуçах чылай водителе, вĕсем пирĕн ыйтâва хаваспах пурнăçлатчĕç. Шел, хăшĕ-пĕри манса кайнипе е хâйĕн ĕçĕпе âшталанса çӳренипе çырăва кĕртсе параймастчĕ, нумай хушâ пĕрле илсе çӳренĕ хыççâн каялла кĕртсе паратчĕ. Çав вâхăтра Вăрнартан шâнкăрав çине шăнкâрав пулатчĕ, корреспонденцисене хâвâртрах ярса пама ыйтатчĕç. Ирĕксĕрех Вăрнарта пурâнакан секретарĕн алла ăнсâртран лекнĕ материала е ӳкерчĕке лартса яма тивнĕ.

Çĕнĕ номере Вâрнартан турттарса килсен редакцин кунти сотрудникĕсем унăн чи малтанхи вулавçисем тесе шӳтлеттĕмĕр. Ара, эпир хаçата калăпласа кăларас ĕçе тӳрремĕнех хутшâнаймастпâр вĕт. Анâçлâ тухнă номершĕн савâнаттâмâр, мĕнле те пулин кâлтăк тупăнсан ятлаçса та илеттĕмĕр.

Пĕррехинче çураки вâхâтĕнче кăларнâ номере илсе килчĕç. Йĕркеллех пек. Пĕрремĕш страницăра ака ĕçĕсем синчен туллин çырнă. Кунтах ӳкерчĕк те пур. Сăнĕ-питĕнчен палласа илме май çук механизаторсем «Беларусь» тракторпа тырă акаççĕ. Клише айне çырнине ĕненес пулсан, «Молния» колхозра çураки ĕçĕсем аплă саралнâ. Çакâ çеç. Нимĕн пăшâрханмалли те çук пек. Анчах ун чухнехи колхоз председателĕ Г. Судаков фотокорреспон-



Ч-36459

дент вĕсен хуçалăхĕнче пулманни, кунта тĕштырăсене «Беларусь» тракторпа акманни, сеялка пускăчĕ çинче икшер сеяльщик тăманни, çапла вара ўкерчĕке йăнăш яни çинчен пĕлтерчĕ. Эпир тĕрĕсех тесе ăнлантарма тăрăшни кăлăхах пулчĕ. Тупсăмĕ питĕ ансат вара. Хаçат страницисем ўкерчĕксĕр илемлĕнех курăнмаççĕ. Çавăнпа та редакци секретарĕ Вăрнар район хаçатĕнче пичетленнĕ ўкерчĕке хамăр хаçатра тепĕр хут çапса кăларнă. Йăнăша, паллах, вулакансем те, хаçат та чăтма пултараймаççĕ.

Йывăрлăхсене çĕнтерсе, сисмесĕрех çăва тухса кайрăмăр. Эпир ку вăхăта малтан редакципе типографи вырнаçнă çурта каялла илтĕмĕр. Кăштах юсакаланă хыççăн редакци çав çурта ĕçлеме куçрĕ. Типографи уçасси пирки шухăшлама та вăхăт çитрĕ. Типографи хаçат редакцийĕн шутланнă май ку ĕçсене йăлтах манăн пурнăçлама тиврĕ.

Вăрнартан пичет станокĕ кўрсе килтĕмĕр. Пĕр номер кăлармалăх ăçтан кирлĕ уптан шрифтсем тупрăмăр, Унччен типографире ĕçленĕ наборщиксемпе печатниксене каялла ĕçе илтĕмĕр. Р. Митрофанова, Н. Серафимова, Т. Кузьмина, В. Чернова хăйсен ĕçне чунтан парăннă ĕçченсемччĕ. Çав тери йывăр условисенче хаçата вулакан патне вăхăтра çитерес тесе вĕсем мĕн кирлине пĕтĕмпех тăватчĕç. Тепĕр чухне, кирлĕ пулсан, реал тата пичет станокĕ умĕнче çĕр каçипех чăтăмлăн ĕçлетчĕç. Тавтапуçах вĕсене тўсĕмлĕхĕшĕн, иксĕлми вăй-хăвачĕшĕн.

Халĕ типографи çĕнĕ те кăткăс техникăпа пуянланчĕ. Вĕсене Е. Ананьева, В. Матвеева, З. Андреева, Р. Капарова, З. Семенова, Р. Раврилова тухăçлă ĕçлеттереççĕ. Типографи 1993 çулхи январьтен хăй тĕллĕн ĕçлекен предприяти пулса тăчĕ. Коллектива çавăнтанпах Ф. Константинова директор ертсе пырать. Унччен вăл кунта мастер пулса ултă çул тимлерĕ.

1965 тата каярахри çулсенче Элĕк тăрăхĕнче электроэнерги пулман. Çавăнпа та пичет станокĕсене ĕçлеттерме киносетьрен электродвижок туянса ятăмăр. Анчах та вăл час-часах çĕмрĕлсе каятчĕ. Апла пулин те, ăна йĕркеллĕ ĕçлеттерес тесе. О. Яковлев, Н, Елизаров мотористсем хытă тăрăшатчĕç.

Вăхăт иртнĕ май, ваттисем вырăнне, редакцире ĕçлеме

пултаруллӑ ҫамра̂ксем килчӗҫ. В. Павлов. В. Одинцов. Е. Тимофеева ҫыравҫа̂сем хăйсен а̂стала̂хӗпе палăрчӗҫ, хаҫатра 20—26 ҫул ӗҫлесе пуян опыт пухрӗҫ. В. Михайлова вара корректура йăна̂шӗсене ярас мар тесе, хаҫата 30 ҫул питӗ тимлӗ вулать. Л. Павлова машинистка та хăй суйласа илнӗ ӗҫре 25 ҫул тимлет,

Хаҫат содержанийӗпе те, илемлӗхӗпе те лайа̂хланса, пычӗ, ыттисемшӗн ыра̂ тӗслӗх пулса та̂чӗ. Республикăри полиграфи издательстви иртерекен смотр-конкурссенче пирӗн хаҫат ҫулсерен малти выра̂нсене йыша̂натчӗ. Вулакансем те хаҫата юратсах алла илетчӗҫ. «Кашни киле —район хаҫачӗ», теттӗмӗр ун чухне. Ҫакна пурнăҫлара̂мăр теме те пултаратăп. Хаҫат тиражӗ 6000 экземпляртан та иртрӗ. Унăн вулаканӗсем татах та нумайрах пулна̂.

Эпӗ чӗрӗк ӗмӗре ях̂ан район хаҫачӗн редакторӗнче вăй хута̂м. «Йыва̂р пулнă-и сире редкторта ӗҫлеме?», тесе ыйтаҫҫӗ тепӗр чухне юлташсем. Ҫăма̂л ӗҫ ҫуках та пулӗ. Анчах халăх умне тухакан хаҫат редакторӗн яваплăхӗ татах та пысăк пек туйа̂нать. Ун чухне хаҫат парти райкомӗпе район Совечӗн органӗ пулна̂. Ҫавна май райкомăн пӗрремӗш секретарӗ, райӗҫта̂вком председателӗ, ку учрежденисенче ӗҫлекен ытти работниксем хаҫата̂н идейăллă содержанийӗпе интересленсех тăнă, редакцие кирлӗ сӗнӳсем пана̂.

Эпир ӗҫленӗ ва̂ха̂тра пурнăҫри тӳнтерле пула̂мсем ҫинчен статьясем, фельетонсем, «Капкăн» страницисемпе кӗтесӗсем та̂тăшах пичетлеттӗмӗр. Нимӗн тӗлӗнмелли те ҫук, критикăлла статья е фельетон «паттăрӗ» редактора е хаҫат сотрудникне тав сăмахӗ калани, «тӗрӗсех ҫырна̂», «малашне юсанатăп» тени пулман. Пачах тепӗр майлă, хурласа ҫырма вăй ҫитернӗ ҫыравҫа̂на тавăрассипе ха̂ратма ха̂тланни сахал мар пулна̂. Шел те, ун чухне критикăлла статьясене «вӗтӗ пула̂сем» ҫеҫ ҫакланкалана̂. Пысăкраххисене, райком членӗсене тӗкӗнме ирӗкех паман. Вӗсем ҫинчен ҫырнă ҫырусене мера̂сем йыша̂нма парти райкомне ярса панипех ҫырлахнă.

Астăвата̂п, чăп та, пӗррехинче райкома̂н пӗр членӗн донжуанла ха̂тланăвӗсем ҫинчен статья ҫапа̂нса тухнăччӗ. Унта илсе ка̂тартни пӗтӗмпех тӗрӗс. Апла пулин те донжуана явап тыттарас вырăнне редактора тапăнчӗҫ.



Ч-36469

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

Ман çийĕн хура пĕлĕтсем капланса килчĕç. Юрать, парти обкомĕ ку ĕçе тĕрĕс хак пачĕ.

Район хаçачĕ 65 çул тултарать. Хальхи вăхâтра вâл хăйĕн сăн-сâпачĕпе те, содержанийĕпе те чылай лайâхрах, пуянрах. Район халăхне пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма, йывâрлăхсемпе пâтăрмахсене çĕнтерсе пыма вĕрентет. Хаçатăн малашлâхĕ татах та пысăкрах. Эппин сана, юратнă хаçатăм, ĕçре пысâк âнăçу, «пурнăç çулĕпе малашне те хâюллâн утма иксĕлми вăй-хал сунатâп.

*А. КУСТИКОВ,*

*чылай çул хаçат редакторĕ пулнăскер.*

*«Пурнăç çулĕпе». 1997-мĕш çулхи августăн 5-мĕшĕ.*

---

# Юратнă ĕç—чун уççи



Типографи ĕçченĕ пулма çăмâл-ши? Тӳрех калар: пĕрпĕр çамрăка е урâххине кунта ĕçлеме илсен вăл тӳрех нимех те тâваймĕ. Малтанах курса тĕлĕнĕ, иккĕленсе те тâрĕ. Пултарăп-ши, тейĕ. Хâнâхма, вĕренме вăхăт кир-

лех. Ҫакна хамран илсе калатӑп.

Асрах-ха 1967 ҫулхи ҫур кунӗсем. Ҫавӑн чухне пырса кӗнӗ-ҫке типографине. Вӑтам шкул пӗтернӗ айван хӗрачана Аркадий Кустиков редактор кӑмӑлпа йышӑнчӗ. Ун чухне типографи ҫуртӗнчех вырнаҫнӑ мӗнпур йыш.

Малтанхи вӑхӑтра вӗренекен пулнӑ, наборщица ӗҫне хӑнӑхнӑ, эппин. Чӑнах та, интереслӗччӗ ӗнтӗ ӗҫӗ. Аслӑ юлташсем пулӑшса, вӗрентсе пынипе кунран-кун хӑнӑхса пытӑм. Шрифтсене пӗлекен пултӑм. Нумай тӗрлӗрен-ҫке вӗсем кунта. Пӗр каласан, чӑвашла саспаллисен пуххине вӗренни кӑна мӗн тери пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Вӗрентсен упа та ташша вӗренет тенӗн, пӗрер саспаллин пухса хаҫат полосисене те наборлакан пултӑм.

Кашни наборщицӑн — пӗрер полоса. Хаҫат тухиччен-хи кун пайтах тимлеме тивнӗ, пӗрер саспаллин пухса наборласа ҫитернӗ. Хаҫата пичетленӗ хыҫҫӑн вара кирлӗ мар ӗнтӗ ҫав саспаллисен пуххи. Ӑна кассӑсене каялла салатса ҫитес номере кӑларма хатӗрленнӗ. Хаҫат наборланӑ ҫӗрте Торпкасси хӗрӗ Нина Серафимова, ҫак ялтанах Раиса Митрофанова. Тавӑт ялӗнчи Елена Васильева питӗ тӑрӑшуллӑччӗ. Пичет ӗҫӗнче те хастар пулнӑ типографи хӗрӗсем. Урмай ялӗнчи Татьяна Кузьмина уйрӑмах ырӑпа палӑрнӑ. Пилӗк-ултӑ пин экземплярлӑ район хаҫатне вулакан патне вӑхӑтра ҫитерессишӗн ҫӗрнекунне пӗлмесӗр тимленӗ ҫавӑн чухнехи пичет ӗҫченӗсем. Кусем — Мӑн Йӑлкӑш ялӗнчи Зоя Михайлова, Эренарти Тамара Васильева, Торпкассинчи Раиса Митрофанова тата ыттисем те. Роза Орлова (Ехремкасси) вара полиграфиста вӗреннӗскер, типографи ӗҫне лайӑх йӗркелесе пыратчӗ.

Хаҫата илемлӗ, пуян содержаниллӗ кӑларассишӗн Аркадий Кустиков (Хирлеппуҫ) редактор, редактор заместителӗ Александр Мешков (Вутлан), Ананий Иванов (Вутлан) ответлӑ секретарь, Михаил Кустиков (Хирлеппуҫ), Николай Пахомов (Мӑн Явӑш), Николай Курцов (Якунекасси) тата ыттисем те нумай тӑрӑшатчӗҫ.

Журналистсемпе полиграфистсем яланах пурнӑҫ таппипчен юлмасӑр ӗҫленӗ. Типографи пурлӑх базине пуянлатсах пычӗ. Ҫитмӗлмӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче наборлакан машина ӗҫлеме пуҫларӗ. Часах вӑл икке те ҫитрӗ. Пӗрремӗш линотипистка Надежда Павлова (Эренар хӗрӗ)

пулнâ. Каярахпа çак кăткâс техникăпа Нина Серафимова, Полина Ефимова (Асамат), Зоя Орлова (Ехремкасси) ĕçлерĕç. Пичетлекен машина та пĕрререн икке çитрĕ.

Пурнăç вâл шав малаллах каять çав. Иртнипе, паянхипе ниепле те килĕшсе пурâнмалли çук. Полиграфистсемпе журналистсем умĕнче халĕ ответлă та пысâк задача—район хаçатне компьютер технологийĕпе хатĕрлесе офсет пичечĕ çине куçасси. Çав вâхăтрах паянхи экономика кризисĕн авâрне лекни пăшâрхантарать, пысâк чâрмав кӳрет пичет ĕçченĕсене. Çапах, йывăрлăхсене çĕнтерсе, район хаçатне лайâх та интереслĕ кăларассишĕн вâй-хала шеллемесĕр ĕçлеççĕ вĕсем.

Вунă çынран тâракан типографи хăйĕн 65 çулхи юбилейне тивĕçлипе кĕтсе илет. Професси ĕçĕнче пысâк ăсталăх пухнâ çынсем вăй хураççĕ кунта. Фаина Константинова çамрăк та пултарулâ директор ертсе пыракан хастар йышри наборщицâсемпе печатницâсем хăйсен тивĕçне тӳрĕ кâмăлпа пурнăçлаççĕ.

Журналистсемпе полиграфистсен ĕçĕ вара уйрâлми çыхâннâ. Пĕри теприсĕр ниепле те пурâнаймĕ. Пĕрле, пĕр тĕллевпе ĕçленĕ чухне вара ăнâçу пулатех. Çавна асра тытса, малашне кал-кал ĕçлесе пырсчĕ, пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утасчĕ.

*Елена ТИМОФЕЕВА,*
*редакцин ответлă секретарĕ.*
*«Пурнâç çулĕпе». 1998 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕ.*

# Утатпăр пурнăç çулĕпе

## 1. Уездсем выранне— районсем



Хальхи вăхăтра анлă Атăлпа сарлака Сăр юханшывĕсем хушшине вырнаçнă Чăваш республики 1767 ялпа 9 хуларан тытăнса тăрать, вĕсенче 1 миллион та 363 пин çын пурăнать. Республикăна 21 район çине пайланă, вăл шута Элĕк районĕ те кĕрет.

Елĕкрех вара администрацине территори пайланăвĕсем пачах урăхла пулнă. Çÿлерех илсе кăтартнă ялсемпе хуласем Хусанпа Чĕмпĕр кĕпĕрнисенчи уездсемпе вулăссене пăхăнса тăнă. Мĕншĕн тесен чăвашсене ун чухне уйрăм республика туса парайман-ха. Ку питех те кирлĕ ĕç Октябрьти социализмла Аслă революци хыççăн çеç пурнăçа кĕрсе пыма пуçланă.

Хусанти Халăх комиссариачĕ çумĕнчи наци ĕçĕсем енĕпе ĕçлекен Чăваш уйрăмĕ тата партипе совет органĕсем, 1920-мĕш çулхи майăн 27-мĕшĕнче Хусан кĕпĕрнинчен Тутар АССРне туса хунине шута илсе, Чăваш автономилле облаçне йĕркелессипе проект хатĕрлесе Мускава янă. РСФСРти коммунистсен партийĕн Центральнăй комитечĕн политбюровĕ тата ВЦИКпа СНК халăх тăратнă ыйтăва хăвăртрах татса парас тесе июнĕн 22-мĕшĕнче ятарлă лару ирттернĕ. Проекта пурте ырланă май, ВЦИК председателĕ М. Н. Калининпа унăн секретарĕ

А. Енукидзе тата СНК председателӗ В. И. Ленин, 1920-мӗш ҫулхи июнӗн 24-мӗшӗнче Чӑваш автономилле облаҫӗ йӗркеленине пӗлтерсе, декрет ҫине алӑпа пичет пусса ҫирӗплетнӗ.

Ҫапла майпа, унччен уезд центрӗ пулнӑ Шупашкар хули Чӑваш автономи облаҫӗн столици пулса тӑрать. Ялсене Шупашкарпа Ҫӗрпӳ тата Етӗрне уесӗсене пайласа ярассӗ. Тепӗр пилӗк ҫултан, облаҫран Чӑваш АССРӗ туса хурсан, асӑннӑ уездсем ҫумне тата Улатӑрпа Патӑръел уесӗсем хутшӑнассӗ. Ҫак тытӑм пирӗн республикӑра 1927-мӗш ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗччен, 5 уездпа 53 вулӑс вырӑнне 17 районпа 620 ял Совечӗ йӗркеличчен пырать. Шӑпах ҫавӑн чухне Етӗрне уесӗнчи вулӑс центрӗ пулнӑ Элӗк сали те район статусне илсе юлнӑ. Ку вара ӑна малалла аталанса пыма анлӑ ҫул уҫса панӑ.

## 2. Хаҫатсем, журналсем

Ҫӗршывра пулса иртекен улшӑнусемпе хыпарсене халӑха пӗлтерсе тӑрас, вӗсен культурипе тавракурӑмне кӑштах та пулин аталантарса пыма пулӑшас тӗллевпе, Н. В. Никольский тӑрӑшнипе, 1906-мӗш ҫулхи январь уйӑхӗнче Хусанта — «Хыпар» хаҫат; Петроградра вара, В. И. Ленин ҫине тӑнипе, 1912-мӗш ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнче, «Правда» хаҫат тухма тытӑннӑ.

Хамӑр тӑрӑхри хаҫат-журналсен кунҫулне тишкерсе пӑхсассӑн, вӗсен шӑпи те революципе тата ун хыҫҫӑнхи ҫулсемпе ҫыхӑнни палӑрать. Акӑ, Шупашкартах, 1917-мӗш ҫулхи апрель уйӑхӗнче — «Чебоксарская правда», 1918-мӗш ҫулхи февральте — «Канаш», 1925-мӗш ҫулхи декабрьте — «Ҫамрӑк коммунист» хаҫатсем, 1924-мӗш ҫулхи июльте — «Ялав» («Сунтал»), 1925-мӗш ҫулхи мартра «Капкӑн», 1929-мӗш ҫулта «Хатӗр пул!» журналсем вулакан умне тухнӑ.

Кусемсӗр пуҫне тата кашни уезд центрӗнчех пӗрер хаҫат кӑларса пынӑ. Сӑмах май, Етӗрнере те 1917-мӗш ҫулхи декабрӗн 23-мӗшӗнче Н. Гранитов «Известия» хаҫата редакцилеме тытӑннӑ. Уездри хаҫатӑн ячӗсем ҫулсерен ҫапла улшӑнса пынӑ: «Трудовая жизнь», «Крас-

ные всходы», «Красный ключ». Уездран район шайне юлсан, Сăр хĕрринчи хулара малтанах — «Спутник колхозника», аллăмĕш çулсен пуçламăшĕнче — «Большевик», каярахпа «Коммунист» ятлă хаçат эрнере виçĕ хут вырăсла та чăвашла пичетленнĕ. Утмăл иккĕмĕш çултанпа унăн ячĕ — «Знамя труда», паян вăл 3400 экземпляр тиражпа вырăсла та чăвашла тухать.

Революциччен Етĕрне уездĕнчи 14 вулăсра 513 ял шутланса тăнă. Вĕсем валли паллах, тĕрлĕ ĕç хучĕсем нумай çырмалла пулнă. Çавна шута илсе, уезд руководителĕсем, 1913-мĕш çулта, хулара пĕчĕк типографи уçççĕ. Унта Елковка ялĕнчи В. И. Мартынов хресчен ĕçленĕ. Тепĕр типографине вара 1914-мĕш çулхи январьте Васильсурск уездĕнчи Шокино ялĕнчен С. П. Фирсов куçарса пынă та В. М. Осиповпа пĕрле пичет ĕçне кÿлĕннĕ...

---

Элĕкре те майĕпен районти власть органĕсем пуçтарăнса çитнĕ, майлă çуртсене вырнаçнă. Вулăс кантурĕ пулнă темиçе пÿлĕмлĕ йывăç çурта—ВКП(б), ăна хирĕçле, çул урлă ларакан икĕ хутлă йывăç çурта райĕçтăвкомпа унăн çĕр епĕпе ĕçлекен комитечĕ тата ытти пайсем йышăннă.

Шел пулин те, район хаçачĕсем тепĕр виçĕ-тăватă çул иртсен çеç пичетлеме тытăннă. Мĕншĕн тесен редакципе типографи валли çурчĕсем те, техники те, вĕреннĕ специалистсем те, хучĕ те сахал мар кирлĕ пулнă. Çав сăлтавсене пулах ĕнтĕ Элĕкри «Колхоз хаçачĕн» малтанхи номерĕ те 1932-мĕш çулхи августăн 4-мĕшĕнче çеç кун çути курнă. Хамăрпа юнашар Вăрнарпа Хĕрлĕ Чутай райхаçачĕсем вара вулакансем патне икĕ çул маларах çитнĕ.

Шупашкарти кĕнеке палатин архивĕнче республикăра тухса тăракан хаçат-журналсем упранаççĕ. Элĕк район хаçачĕн пĕрремĕш папки 1932—1935-мĕш çулсенчен тăрать. Унта мана интереслентерекен фактсем нумай тупăнчĕç. Элĕк райкомĕпе райĕçтăвкомĕн тата райпрофсоветăн ултă кунта пĕрре тухса тăнă хаçатăн малтанхи виçĕ номерĕ упранса юлман, тăваттăмĕшĕ 1932-мĕш çулхи сентябрĕн 6мĕшĕнче (ытларикуп) тухнă. Пысăк форматлă

икĕ полосаллă хаçата Т. Я. Золотов редактор алă пуснă, ăна Чăвашполиграфтрестăн Вăрнарти 8-мĕш типографийĕ пичетлесе кăларнă. Тиражĕ паллă мар. Çав çул пĕтĕмпе 16 номер тухнă, анчах упранса юлнисем тăваттă çеç.

1933-мĕш çулта пурĕ 67 номер пичетлеме пултарнă. Малтанхи çур çулта хаçат пысăк форматпах икĕ полосаллă пулнă, ăна А. С. Степанов редактор алă пуснă, Вăрнарта пичетленĕ. Иккĕмĕш çур çултан пуçласа редактор ĕçне П. С. Меценатова йышăннă. Сентябрĕн 2-мĕшĕнче тухнă номере Полиграфтрестăн Шупашкарти 1-мĕш типографийĕ Элĕке килсе пичетленĕ. Шăпах çавăн чухне районта уйрăм типографи уçас ыйту хĕрсе çитнĕ...

...Элĕк район хаçачĕ 1932—1962-мĕш çулсенче — «Колхоз хаçачĕ», 1965—1996-мĕш çулсенче «Ленин çулĕпе» ятсемпе тухса тăнă пулсан, çĕршыври политикăлла лару-тăру улшăнăвĕ райхаçата 1996-мĕш çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнчен «Пурнăç çулĕпе» утма хистенĕ.

Вăтăр виççĕмĕш çулхи сентябрьтен пуçласа 1934-мĕш çулхи ноябрь вĕçлениччен хаçат пĕчĕк форматпа çеç тухнă. Тиражĕ 600тен 1800 экземпляра çитнĕ, тепĕр çулхинех вăл 2500 таран ӳснĕ. Анчах та 1958-мĕш çулччен хаçат калăпăшĕ пĕр пысăк полосаран мала каяйман, тухасса та эрнере пĕр-ик хут çеç тухкаланă. Кайран вăл эрнере виçĕ хут пичетленсе пынă, сакăрвуннăмĕш çулсенче унăн тиражĕ 6 пинрен те иртнĕ. Шел, çĕршывра çичĕ çул каярах пуçланнă «рынок» тапхăрĕ редакцире ĕçлекенсене те пысăк йывăрлăха кĕртсе ӳкерчĕ. Ялсенче пурăнакансем çулталăкĕпех алла ĕç укçи тытса курайманнипе, çавна пулах хаçат çырăнса илме те пултарайманнипе Ирĕксĕрех тираж чакса пырать. Халĕ вăл 1700 экземплярпа çеç пичетленет, ăна пичетлеме те хут кирлĕ. Хутне илме те, пичетленĕшĕн тӳлеме те укçи çитмест. Çапах та коллектив шанчăка çухатасшăн мар. Редактор ĕçĕсене кăçалхи февраль çурриччен туса пыма пикеннĕ Юрий Леонидович Корнилов пĕлтернĕ тăрăх, малашне пирĕн район хаçачĕ те офсет меслечĕпе пичетленме тытăнмалла. Кӳршĕсем ку йĕрке çине çулталăк пуçламăшĕнче куçрĕç.

# 3. Редакципе типографи çурчĕсем

Хаçата ялапах вâхăтра тата йĕркеллĕ кăларса тâрас тесен пурте çителĕклĕ пулмалла. Чи малтан, паллах, çурчĕ кирлĕ, анчах та ун пекки Элĕкре часах тупâнман. Çавâнпа та редакципе типографи, пĕр-пĕринчен уйрâлмасăр, вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ. Вăтăрмĕш çулсенче редакци — ВКП(б) райкомĕнче, типографи почта çумне тĕксе тунă çуртра вырнаçнâ. Хĕрĕхмĕш—аллâмĕш çулсенче редакци — райĕçтâвком çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче, типографи пĕрремĕш хутра вырăн тупнâ. Çакâнта вĕсем хâйсем валли ятарлâ çурт тăвиччен пĕрле ĕçленĕ.

Çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче КПСС райкомĕпе райĕçтâвкомăн кирпĕчрен купаланă виçе хутлă çурчĕ



*Автовокзал çурчĕ. Вâл 1979-мĕш çулхи августăн 8-мĕшĕнчи пушарта çуниччен икĕ хутлă пулнâ. Унта 1927—1962-мĕш çулсенче райĕçтâвком вырнаçнă. Çав çуртрах вăтăрмĕш-аллâмĕш çулсенче редакципе типографи те вырăн тупнâ.*

çĕкленнĕ, власть органĕсем пурте унта куçнă. Киввинче вара ВЛКСМпа ДОСААФ тата профсоюз райкомĕсем, ялхуçалăх управленийĕне çар комиссариачĕ юлнă. Каярахпа çав çурта вăтам шкула пачĕç. Шел пулин те 1979-мĕш çулхи августăн 8-мĕш каç. Етĕрнерен куçарса килнĕ çуртăн иккĕмĕш хутĕнче пушар тухрĕ. Пушар командисем çине тăнипе пĕрремĕш хутне çăлса хăварчĕç, унта халĕ автовокзал вырнаçнă.



*Редакципе типографи çурчĕ. Сулахай енчи — типографи, вăл 1959-мĕш çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче, сылтăмри — редакци, вăл 1969-мĕш çул вĕçĕнче ĕçе кĕнĕ.*

Редакципе типографин хальхи пĕр хутлă кирпĕч çуртне тăвас ĕç, ДОСААФ райкомĕ пулнă вырăнта 1956-мĕш çулхи май уйăхĕнче пуçланнă та 1959-мĕш çулхи август уйăхĕнче вĕçленнĕ. Строительство ĕçĕсене Илья Петрович Петров редакторпа (Чардак ялĕнчен) типографи мастерĕ Юлия Афанасьевна Афанасьева (Татмăш сывăхĕнчи Вăрманкасран) йĕркелесе янă. Типографи çĕнĕ çурта 1959-мĕш çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче, редакци октябрĕн 1-мĕшĕнче куçнă. Ун чухне 1958 çулхи августран хаçат редакторĕнче - Хирлеппуçĕнчи Аркадий Григорьевич Кустиков, типографи мастерĕнче çав ялти Михаил Иванович Иванов ĕçленĕ.

Çулсем иртнĕ, районсене пысăклатас ĕç пуçланнă. Çавна май, 1962-мĕш çулхи апрель вĕçĕнче «Колхоз хаçачĕ» юлашки хут пичетленнĕ. Типографин пĕтĕм техникине Вăрнара куçарса кайсан, редакципе типографи çуртне Госбанкăн филиалĕ йышăннă. Тепĕр виçĕ çултан

пĕтерне районсене çĕнĕрен йĕркелеме тытăнна̂. 1965-мĕш çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче вара Элĕк райкомĕпе райĕçта̂вкомĕн тата хала̂х депутачĕсен органĕ «Ленин çулĕпе» хаçата̂н пĕрремĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Ăна каллех А. Г. Кустиков редакцилеме пуçланă та мĕн пенсие кайиччене (1986 ç.) хаçатран уйрăлман.

Район хаçачĕ 1958-мĕш çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен эрнере виçĕ хут та̂вата̂ полосапа (2 листа) тухса пына̂ май, редакципе типографире ĕçлекенсен хисепĕ ӳснĕ, вĕсене пĕр çуртра ĕçлесе пура̂нма тăва̂рланса çитнĕ. Çавăнпа та 1968—1969-мĕш çулсенче типографи çумне тĕксе редакци çуртне купаласа лартнă. Ăна хăва̂ртрах ĕçе ярассишĕн Федот пуппа хĕрĕсем тата редакципе типографи работникĕсем чунтан та̂рăшна̂. Çĕнĕ çурта, тĕпрен илсен, районти комхоз вăйĕпе туна̂. Редакцин литсотрудникĕсем 1970-мĕш çула ха̂йсен çуртĕнче кĕтсе илнĕ.

# 4. Литсотрудниксем

Вăтăрмĕш-çитмĕлмĕш çулсенче редакцире ĕçлекенсене хальхи пек корреспондентсем темен, литература сотрудникĕсем тесе каланă. Ĕçе илнĕ чухне те вĕсене приказ кĕнеки çине çаплах çырса хунă. Утмâл ултâ çул хушшинче редакцире 75 литсотрудник ĕçлеме ĕлкĕрнĕ, çав шутран 15-шĕ студент-практикантсем пулнâ. Вĕсемсĕр пуçне 16 çын — редактор сĕтелĕ хушшинче, 17 çын — радиовещани микрофонĕ умĕнче, 13 çын автомашина рулĕ умĕнче ларса курнâ, 13-шĕ фотокорреспондент ятне илтнĕ. Литсотрудниксем хатĕрлесе панă материалсене 13 секретарь-машинистка çапса пâхнă, хаçата кайма пултаракан йâнăшсене корректор сăнаса тâнă. Вâл хисеп те 25 çынна çитнĕ.

Редакципе типографи штатĕнче çавнашкалах хуралçâ-техничкăсем — 75 çын, счетовод-бухгалтерсем — 19 çын, мотористсем 5-ĕн ĕçлесе курнâ.

Литература сотрудникĕсенчен чылайâшĕ хăйсен ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса, ĕç дисциплинине çирĕп пâхâнса пурнăçланâ. Ахальтен мар пулĕ ун пеккисене час-часах ырланâ, пурлăхпа мораль тĕлĕшĕнчен хавхалантарнâ, пай заведующийĕсем пулма çирĕплетнĕ. Тĕслĕхсем темĕн чухлех илсе кâтартма юрать. Акă, Вутланта çуралса ӳснĕ партипе комсомол тата вâрçăпа ĕç ветеранĕ Александр Николаевич Мешков (1920—1993) кунта 1948-мĕш çул вĕçĕнче ĕçлеме килнĕ те 32 çултан тин тивĕçлĕ канăва кайнâ. Çав çулсенчен пиллĕкĕшĕ — редактор, ыттисем редактор заместителĕ, корреспондент пулнипе иртнĕ. Çавнашкалах Хирлеппуçĕнчи тепĕр ветеран, хĕрӳ чун-чĕреллĕ коммунист, 1926-мĕш çулта çуралнâ Аркадий Григорьевич Кустиков та хâйĕн юратнă ĕçне ответлâ секретарьтен пуçласа редактора çитнĕ, редакципе типографи коллективĕсене 24 çул ертсе пыма пултарнâ. Унăн икĕ çул аслâрах пиччĕшĕ, вăрçâ вут-çулăмĕ витĕр тухнâ Михаил Григорьевич Кустиков та редакцирен ытлашши уйрâлсах кайман: литсотрудник, çырусен пайĕн заведующийĕ, ответлă секретарь пулса 16 çул тâрăшнâ. КПСС райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулнâ Леонид Максимович Владимиров та тивĕçлĕ канăва ту-

хиччен çичĕ çул ытларах редактор ĕçне тытса пычĕ.

Изванкăри Петр Кириллович Кириллов (1924—1998) бухгалтер кунта 19 çул укçа-тенкĕ шутланâ, ытти документсене йĕркелесе пынâ. Асаматри Николай Гордеевич Ефремов та радиоорганизаторта ĕçлеме пуçлани март уйăхĕнче 19 çул çитет. Çавнашкалах Асамат хĕрĕ пулнă Елена Савельевна Тимофеева (Иванова) вâтам шкул хыççăнах типографие килсе кĕнĕ те наборщицâна вĕреннĕ, çав хушăрах ĕçленĕ те. Ĕçĕ вара пĕрре те çâмâл мар: пĕтĕм саспаллисене алăпа пуçтармалла пулнâ. Тепĕр виçĕ çултанах комсомолкăна редакцине ĕçлеме илнĕ. Хĕре ялхуçалâх пайĕн корреспонденчĕ, заведующийĕ туса хунâ. Ĕçленипе пĕрлех Вăрнарти совхоз-техникумра тата Чâваш патшалăх университетĕнче заочно майпа пĕлӳ пухнă. Пултарулâхне кура âна 1983-мĕш çулта ответлă секретарь ĕçне шанчĕç. Кâçал вâл редакцире ĕçлеме пуçлани 27 çул тултарчĕ, çав çулсенчен иккĕшĕ редактор сĕтелĕ хушшинче иртрĕ.



*ӲКЕРЧĔКРЕ: редакци секретарь-машинистки Л. К. Павлова.*

**Асамат ялĕнче çуралса ӳснĕ чăтăмлă та маттур хĕрарăмсенчен тепри — Лидия Кирилловна Павлова (Никифорова).** Шкул саккинчех уйрăлсан, 1972-мĕш çулта редакцин секретарь-машинистки пулса тăнă та паянхи кунччен вăл çак ĕçре тимлет. Унăн ĕçĕ теприсене çăмăл пек курăнать пулĕ те, анчах та кашни авторăн тĕрлĕ почеркпа çырнă материалĕсене вулама питĕ кансĕр. Унăн мăшăрĕ Вениамин Геннадьевич Павлов — Тури Хурасан ялĕнчен. Вăл Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ вăхăтрах Йĕпреç район хаçатĕнче ĕçленĕ, унтан 1977-мĕш çулхи кĕркунне ăна Элĕк район хаçат редакцине куçарнă. Редактор заместителĕ пулнă май, парти пурнăç пайне ертсе пынă. Партин Горький хулинчи аслă шкулĕнче вĕренсе таврăнсан, журналист ĕçе пиккеннĕ: редактор заместителĕ, çырусен пайĕн заведующийĕ, ответлă секретарь пулнă. Хальхи вăхăтра вăл обществăпа политика пурнăç пайĕн заведующийĕ. Унпа пĕр пӳлĕмрех ларнă Йӳçпан çыннин, Виталий Вениаминович Одинцов корреспондентăн ĕç стажĕ те 22 çултан кая мар.

❁❁❁





ӳКЕРЧЕКРЕ: Ираида Иванова корреспондент, Лидия Павлова секретарь-машинистка, Надежда Корнилова бухгалтер, Альбина Кузьмина корреспондент, Гурий Терентьев районти литературăпа краеведени музей директорĕ, Геннадий Савельев журналист, писатель, краевед, Юрий Корнилов редактор, Михаил Кустиков вăрçăпа пичет ветеранĕ. Вениамин Павлов пай заведующийĕ.

Ҫӳлерех асâнса тухнâ юлташсен информацийĕсемпе статйисем, очеркĕсемпе калавĕсем тата сâввисем тâрăх, хаҫатра типографи йăнâшĕсем ан кайччăр тесен, питĕ тимлĕ пулмалла, Ку енĕпе вара Валентина Ильинична Михайлова (Ильина) корректора ниепле те хурлаймăн. Мĕншĕн тесен, Вырâс Сурăм тâрâхĕнчи Анаткас ялĕнче ҫуралса ӳснĕскер хаҫат редакцийĕнче 31 ҫул ĕҫлесе кашни сâмахпа предложенин йĕркисене тата орфографи правилисене лайâх ăнланса ҫитнĕ.



*ӲКЕРЧЕКРЕ: В. И. Михайлова корректор.*

Редакци сĕтелĕсем хушшинче ларнâ Пелагея Сергеевна Меценатовâпа (Чурачăк) Урикассинчи Семен Филиппович Саперкин тата Тавâтри Иван Тихонович Тихонов редакторсем — 4-шар çул, Якунекассинчи Николай Анисимович Курцов (1930—1980) ответлă секретарьпе Куракâшри Геннадий Дмитриевич Федоров (1947—1991) фотокорреспондент — 12шер çул. Ехремкассинчи Харитон Иванович Лисин (1914—1996) редактор-литсотрудникпа Етĕрне районне кĕрекен Мâн Явăшри вăрçăпа ĕç ветеранĕ Николай Егорович Пахомов (1925—1991) корреспондент тата çырусен пайĕн заведующийĕ ултă çул алăран хутпа ручка яман, анчах та çав юлташсен кунçулĕ темиçе çул каяллах сӳннĕ.

Хаçат вулакансем валли тухать. Вăл пурне те районта пулса иртекен мероприятисемпе, çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарать, ветерансен кунçулĕ тата хамăр çуралса ӳснĕ ялсен историйĕ çинчен çырса кâтартать. Хаçат страницисенче çавнашкалах право йĕркисене пропагандăласси те кирлĕ пек пулса пырать. Кĕскен каласан, эпир район халăхне тâрâшса вĕренме, вăй хурса ĕçлеме, пĕрпĕринпе килĕштерсе пурâнма, тăван тавралăха юратма тата унâн авалтан пыракан историне пĕлме пулâшатпăр, вĕсене пурнâç çулĕпе çирĕппĕн утма хавхалантарса пыратпâр. Хаçатпа туслâ çыхăну тытакансенчен Чâваш Сурâмĕнчи халâх музейĕн директорĕ, вăрçăпа педагогика ĕçĕн ветеранĕ, 84ри Кирилл Васильевич Вороновпа редакторта тивĕçлĕ канâва кайиччен икĕ çул ĕçлеме ĕлкĕрнĕ Мăн Тукташ çынни, чылайранпа Шупашкарта пурăнакан 63ри Валериан Федорович Степанов журналист тата Элĕкри литературăпа краеведени музейĕнче ĕçлекен Ураскилт ял çынни, 59ти Гурий Константинович Терентьев учитель ячĕсене асâнмасăр хâварас килмест. Вĕсем виççĕшĕ те пĕр-икĕ çул каялла «ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

# 5. Ялкорçем

Хальхи вăхăтра пирĕн район территорийĕнчи 117 ялтан 20 ял администрацийĕпе (малтанхи ял Совечĕсем) 30 ялхуçалâх предприятийĕ йĕркеленĕ. Вĕсен кулленхи ĕçĕпе пурнăçне пур енлĕн çутатса тăрас пулсан, райхаçат сотрудникĕсен яланах çул çинче çӳреме тивет.

Ялти корреспондентсен интереслĕ те витĕмлĕ информацийĕсене, тарăн содержаниллĕ статйисене вулакансем хапăлласах йышâнаççĕ. Хаçатăн штатра тâман активисчĕсем хушшинче çавнашкалах хамăр районти ялсенче çуралса ӳссе пурнâç çулĕ çине тухнâ писательсене те курма пулать. Вĕсен сâвви-калавĕсем те хаçат страницисенче час-часах вырâн тупаççĕ. Паян эпир сире район хаçачĕпе туслă çыхăнура пурâнакан хăшпĕр юлташсен сâнӳкерчĕкĕсене пâхма сĕнетпĕр.



*Элĕкри З. Ф. Катеев учитель-пенсионер.*



*Мăн Ямашри В. Михайлов (Ямаш) писатель.*



*Мăн Ямашри В. В. Синичкин писатель.*



*Шĕмшешри вăрçăпа ĕç ветеранĕ Н. А. Андреев.*



*Вăрçăпа педагогика ĕçĕн ветеранĕ, ЧР тата РФ культурисен тава тивĕçлĕ работникĕ, Чăваш Сурăмĕнчи халăх музейĕн директорĕ, 85-ри хисеплĕ краевед Кирилл Васильевич Воронов.*

# 6. Полиграфистсем

Райхаҫат редакцийĕнче 1933-мĕш ҫулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа паянхи кунччен ҫырса пынӑ приказ кĕнекисем (пурĕ 13) йĕркеллĕ упранаҫҫĕ. Пĕрремĕш кĕнекери пĕрремĕш номерлĕ приказа ҫапла ҫырса хунӑ:


Приказ № 1
от 20го октября 1933 года
По приказу Чувашгиза № 48 от 16 го октября 1933 г. и по поручению Чувашгиза организована в с. Аликове Аликовского района райтипография № 12 ... Вступает в эксплоатацию с 20го октября 1933 года. Принимаю обязанности директора Аликовской типографии. Приступить в обязанности.
Приказ № 2 от ... октября 1933 г.
Принимаю Петрова Якова Петровича из дер. Типсирмы Аликовского района Чувашской АССР на работу в типографию в качестве наборщика ставкой в ... рублей
Директор Аликовской типографии № 12 Чувашгиза Зубровский

*Укерчĕкре: Элĕк район типографийĕн 1933-мĕш ҫулхи октябрĕн 20-мĕшĕнчи 1-мĕш номерлĕ приказĕ. Ӑна типографи директорĕ Н. Зубровский алӑ пуснӑ.*

Кам-ха вăл Зубровский, хăш ялсем? Вăрçăпа пичет ветеранĕ, Элĕкре пурăнакан 74-ри Михаил Григорьевич Кустиков калапă тăрăх, Никифор Зубровский Качалав ял çынни пулнă иккен, каярахпа Вăрнар район типографийĕнче те ĕçленĕ. Кунта вара вăл 1935-мĕш çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче 37-мĕш номерлĕ приказ çырнă та, хăйĕн йĕрне çухатнă.

Районта типографи уçнин тĕп тĕллевĕне тивĕçĕ «Колхоз хаçачĕ» тата ВКП(б) райкомĕпе райĕçтăвкомăн ĕç хучĕсене пичетлесси пулса тăнă. Тепĕр çулхи июнĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа Элĕкри МТС (машинăпа трактор станцийĕ) политпайĕ те вĕсене «Колхозник сасси» хаçат кăларса пыма заказ парать. Çав кун унăн пĕрремĕш номерĕ 1000 экземплярпа тухать. Пĕчĕк форматлă хаçат пилĕк кунта пĕрре пичетленнĕ. Малтанхи вунă номерне Н. З. Захаров редакциленĕ, ыттисене Ф. Я. Ефимов редактор алă пуснă. Шупашкарти кĕнеке палатинче асăннă хаçат 23-мĕш номер таран упранса юлнă, вăл 1934-мĕш çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче кун çути курнă.

Вăтăрмĕш-çитмĕлмĕш çулсенче пичетлемелли машинăсем пулнă-ха, анчах та заголовоксене çес мар, кăшни информацине статьянах алăпа пуçтарнă саспаллисемне калăпламa тивнĕ. Тĕрĕсрех каласан, хаçатăн кашни номернех алăпа пуçтарнă саспаллисенчен тултарма çăмăл пулман, çавăнпа та йăнăшсем те кайкаланă. Уншăн, паллах, пурне те ятланă. Йывăрлăха чăтаймасăр чылайăшĕ ку ĕçрен хăйсен ирĕкĕпех тухса кайнă. Мĕншĕн тесен, çурçĕрчен пикамăн та типографире юлас килмен.

Район центрĕнче тата чылай ялсенче 1967-мĕш çулччен электроэнерги пулман. Çапах та сĕç-кантăр заводĕнчи электродвигательсене ĕçлеттерме вырăнти электростанци ток парса тăнă. Малтанхи 25 çул хушши типографи машинисене ал-ура вăйĕпе ĕçлеттернĕ пулсан, 1959-мĕш çулхи сентябрьтен заводăн электротокĕ типографи станокĕсене те çăмăллăн çавăрттарма тытăннă. Анчах та, лини çинче час-часах аварисем пулкаланипе, хаçат вăхăтра тухайман. Çавна шута илсе, типографи райкиносетьрен бензинпа ĕçлекен Л—6/3 типлă пĕчĕк движок илсе янă. Мотористсем ăна йĕркеллĕ пăхса тăнă.

Типографи уçăлнă кунран пуçласа, Тинçырма ялĕнчи Яков Петрович Петров наборщик ĕçне тытăннă. Тепĕр

уйăх пуçламăшĕнче ăна валли Урпаш ялĕнчен Павел Александрович Козлов тупăннă. Çав уйăх вĕçĕнчех вĕсем патне Н. Николаев та ĕçлеме пынă, Хирлеппуçĕнчи В. Яндуванова вара техничка ĕçне кӳлĕннĕ. Пĕтĕм ĕçе шута илсе пыма типографире счетовод та кирлĕ пулнă. Ку енĕпе Качалав ялĕнчи Николай Алексеевич Козлов 1935—1942-мĕш çулсенче хăйĕн тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçланă. Ахальтен мар пулĕ унăн 1940-мĕш çулта типографи коллективне те ертсе пыма тивнĕ.

Тишкерӳ тăрăх çакă палăрать: вăрçăччен типографире арçынсем ĕçлекеленĕ, çывăхри ялсенчи хĕрсемпе хĕрарăмсем кунта 1937-мĕш çулта ытларах пыма тытăннă. Цехри ĕçе вырăнтах хăнăхса пынă. Темшĕн-çке уп чухне чăваш хĕрĕсем полиграфистсем хатĕрлекен Хусанпа Уфа хулисенчи профтехучилищĕсене кайма шикленнĕ. Каярахпа çеç, 1965-мĕш çулта, Ехремкассинчи Роза Орлова комсомолка Уфари училищĕне кайма хăюлăх çитернĕ, теприсем вара Шупашкарти типографипе профтехучилищĕре вĕренсе ăсталăха ӳстернĕ.



*— Ӳкерчĕкре: типографи наборщицинче 15 çул ĕçленĕ П. П. Ефимова.*

Полиграфистсен ĕçĕ йывâр та пархатарлâ. Цехра ĕçлекенсем пурте ял хĕрарăмĕсем. Пĕр хăпâхнâ ĕçе чунтан парăннâран çеç Эрепарти Елизавета Ананьевâпа Зинаида Семенова тата Рина Капарова наборщицăсем 27 çул çакăнтан уйрâлаймаççĕ. Вĕсемсĕр пуçне тата Урмайри Татьяна Кузьмина — 25 çул, Тимĕрçкассинчен Юлâша качча тухнâ Васса Андреева — 20 çул, Кĕçĕн Тăванти Валентина Михайловâпа Тукачри Валентина Матвеева— 18 çул, Асаматри Полина Ефимова — 15 çул, Зоя Андреева — 21 çул, Торпкассинчи Нина Серафимова 12 çул кунсерен Элĕке утнă, вулакансене хаçатăн черетлĕ номерне кâларса пама васканâ. Аслисенчен Роза Гаврилова линотипистка та юлмасть. Вâл та çичĕ çул ытла Кĕçĕн Тăван ялĕнчен кунсерен ĕçе çÿрет. Чыс та мухтав вĕсене.

Юлашки çулсенче типографи çĕнĕ техникăпа пуянланчĕ. Унта халĕ саспаллисене пухмалли линотипсем — Н-14, Н-140 тата хаçат пичетлемелли ПС-1М, ПП-45 машинăсем икшĕр вырнаçтарнâ. Вĕсемсĕр пуçне хут касмалли БРП-2М тата çĕлемелли БШП-4 машинăсемпе чушкâсем шăратмалли СЛВ-2 çурмаавтомат пур. Инçе çула тухса çÿреме «Москвич» автомобиль туяннâ, âна Кĕçĕн Тăванти Геннадий Матьянов юсавлă тытать. Бухгалтери докуменчĕсене ултâ çула яхâн Альбина Антипова вырâс хĕрарâмĕ йĕркелесе пырать, укçа-тенке перекетлĕ тытма тâрâшать.

1993-мĕш çулхи январьтен Элĕк район типографийĕ хайне тĕллĕн ĕçлекен уйрăм предприяти шутланать. Вâл Чăваш Республикинчи пичет енĕпе ĕçлекен патшалâх комитечĕн пĕр подразделенийĕ. Вунâ çынран тăракан туслă та тăрâшуллâ коллектива çавâнтанпах Фаина Федоровна Константинова йĕркеллĕ ертсе пырать. Хайне директора çирĕплетиччен Хурăнсур хĕрĕ Шупашкарти полиграфистсен училищинче вĕреннĕ, хыççâн тепĕр çичĕ çул çак типографирех мастерта тимленĕ. Ĕçленĕ хушâрах пĕлĕвне финанс техникумĕнче заочно майпа ÿстернĕ, малалла та вĕренме ĕмĕтленет. Çемьеллĕ хĕрарâма, куген, кансĕртерех те пулĕ, çапах та 32-ри хĕрарâм ыррине шанса пурâнать.

Типографи коллективĕ хâйĕн умне лартнâ задачăсене яланах чыслăн пурнăçласа пыма тâрăшать. Кунта хаçат пичетленисĕр пуçне, предприятисемпе организацисен та-



*ӲКЕРЧĔКРЕ: Елизавета Ананьева линотипистка, Рина Капарова верстальщица, Роза Гаврилова линотипистка, Альбина Антипова бухгалтер, Зоя Андреева наборщица-печатница, Геннадий Матьянов шофер, Зинаида Семенова наборщица-печатница. Фаина Константинова директор, Валентина Матвеева наборщица-печатница.*

та учрежденисен заказĕсене те вâхâтра тивĕçтереççĕ. Сâмах май, юлашки тâватă çул хушшинче кăна полиграфистсем «Элĕксем — Перемышль паттăрĕсем», «Элĕк енĕ», «Аликово: вчера и сегодня», «Акташсем», «Ямаш — тĕпе кĕмен чăваш», «Кремль сакки сарлака» кĕнекесемпе тĕрлĕ буклетсем тата брошюрâсем пичетлесе кâларчĕç. Кĕçех, акâ редакципе типографин кунçулне сăнласа паракан тепĕр пĕчĕк кĕнеке кун çути курмалла. Вâл «Утатпăр пурнâç çулĕпе» ятлâ пулать.

Сисмерĕмĕр те, типографин 65 çулхи юбилейĕ çывхарса та çитрĕ. Калас пулать, çак тапхăрта редакципе типографи алâкĕсене 400 çын кунсерен уçса кĕрсе хăйсен ĕç вырăнĕсене вырнаçнâ. Тепĕр майлâ каласан, çавâн чухлĕ çын ĕçлеме ĕлкĕрнĕ те. Вĕсенчен 75 хуралçă-техничкă, 70 наборщик-печатник, 35 директор. Çак хисепрен чылайăшĕ халĕ çĕр çинче çук та ĕнтĕ. Çапах та, тивĕçлĕ канура пурăнакан ĕç ветеранĕсене, вĕсемпе пĕрлех пичет ĕçĕнче вăй хуракан полиграфистсемпе журналистсене тата хаçат тусĕсене сумлâ юбилей ячĕпе чĕререн саламлатâп, паянхи йывăр та пâтранчâк пурнâçа чâтса иртterме пурне те çирĕп сывлăх, телейпе ăнăçу, кулленхи ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем туса пурнâç çулĕпе çав-çавах малалла утма сăнетĕп

# Чĕрĕк ĕмĕр—линотиппа



Эренар ялĕн хĕрачи Лиза 1967 çулта Элĕкри вăтам шкултан âнăçлă вĕренсе тухнâ. Малашнехи кунçул еплерех пулĕ-ши? Ана пикама та пĕлмелле туман çав. Шâпарсп вара пиепле те иртеймĕн. Бригада ĕçĕсене кўлĕннĕ вунçиччĕри хĕр. Мĕн хушнâ, çавна пурнăçланâ ял çыннисемпе пĕрле. Ку ĕç йывăр, тепри çăмâлтарах тесе тирксе таман. Пур ĕçре те активлă хутшâннă, правур та вâр-вар пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Лизâна çамрâксен вожакĕ — комсомол организацийĕн секретарьне суйланă. Ку обществâлла ĕçре те активлă та хастар пулнă хĕр.

Çамрâксен романтика енне туртâнни те пур çав. Лиза та, ав, хула пурнâçне тутанса пăхма шутланâ. Тус-юлташĕсем ертсе кайнипе Саратовах çитнĕ. Вâл кунта чукун çул çинче тăрăшать. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче те ĕçлеме тўр килет ăна. Хула çынниех пулатчĕ пулĕ

Лиза — амâшĕ, шâллĕ киле чĕнмен пулсан. Çитменнине амâшĕ час-часах чирленĕ, килте âна пăхакан кирлĕ пулнâ. Çапла тâван ялне таврăнать Лиза, кил-йыш тĕрекĕ пулса тăрать.

Тус-тантâшĕ Тамара Элĕке ĕçлеме чĕнсен хытах савâнать. Эренар хĕрĕ Тамара Васильева ун чухне типографире бригадир пулнâ. Часах Лиза та ку предприяти ĕçченĕ пулса тâрать. Малтан, паллах. вĕренекен должноçĕнче тимлет. Кунта унсăр ниепле те ĕçе хâнâхаймăн. Çапла майĕпен шрифтсене, типографири ытти нумай «вâрттăнлâхсене» пĕлекен пулать. Çавнашкал хăй тăрâшнипе наборщица профессине алла илет Лиза. Линотиписткâпа (машинâпа наборлакан) вĕренме кайма сĕнсен вара хавасланах килĕшет вăл. Шупашкарти 1-мĕш типографире ку ĕçĕн кăткâслăхне тишкерет. Професси âсталâхне ўстернĕскер район типографине таврâнать. Лиза саспаллисене шâратса наборлакан машина хуçи пулса тăрать. Вăл — 5-мĕш разрядлâ ăста рабочи.

Çапла, çул хыççăн çул иртрĕ. Елизавета Ананьева типографи ĕçне кўлĕннĕренпе 27 çул çитрĕ. Халĕ те линотип умĕнче вâл. «Пурнâç çулĕпе» хаçата кăларнă çĕре куллен активлă хутшâнать. Страницâсенче кун çути куракан материалсем йăлтах линотиписткâсен ĕçчен аллисем витĕр тухаççĕ вĕт. Кунта çакна палăртма та кăмâллă. Типографи историйĕнче линотиппа Елизавета Ананьева чухлĕ вăй хуракан пулман. Хăватлâ та кăткâс техникâпа чĕрĕк ĕмĕр ăнăçлă ĕçлеттерет. Типографи ĕçĕн чâн-чâн ветеранĕ эппин. Ахальтен мар ĕнтĕ âна пĕр ĕçри юлташĕсем те хисеплеççĕ, пирĕн наставница, теççĕ. Елизавета Ивановнâна пархатарлă ĕçшĕн Хисеп грамоти парса чыс тупâ, «Тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ» хисеплĕ ят пама тăратнă.

# Ят-сум ахаль килмест



Район хаҫачĕн редакцийĕпе типографи пĕр ҫуртра вырнаҫнӑ. Ҫав хушӑрах кунта икĕ расна ĕҫ коллективĕ пулни интереслĕ пек туйӑнать пулĕ хӑшпĕрисене. Тĕрĕссипе вара ҫаплах ĕнтĕ. Анчах ĕҫĕсем уйрӑлми ҫыхӑннӑ, пĕри теприсĕр пурӑнаймасть, теме те юрать. Икĕ йышри вуншар ҫынпӑн кулленхи ĕҫпе кашниех пĕлсе тӑратпӑр темелле.

Ровенна Кондратьевнӑна, акӑ нумай ҫул юнашар ĕҫленĕрен аван пĕлетĕп. Эренар ялĕнче ҫуралса ӳснĕ ҫапҫамрӑк хĕр типографине 1972 ҫулта пырса кĕнĕ. Ун чухне вӑл 18 ҫулта ҫеҫ пулнӑ. Йышра, тĕпрен илсен, пурте ҫамрӑксем. Вĕсене курса, Рина чунĕ те ҫĕкленнĕ. Эпĕ те наборщица е печатница пулатӑпах тесе ҫирĕп тĕллев лартнӑ вӑл. Ҫитмеппине пĕр ял хĕрĕ Лиза та кунти ĕҫе анчахрах кӳлĕннĕ пулнӑ. Рина хыҫҫӑн типографине унӑн тус-юлташĕ Зина та хушӑннӑ. Ĕҫлес кӑмӑл та хушӑнсах

пынâ хěрсен. Йывăрлâхсене пěрле çěнтерпě. Ирхине ěçе, каçхине киле каллех юнашар. Ултâ-çичě çухрâм вěсемшěн ним выранне те пулман. Çуранах, шâкâл-шăкăл калаçса çÿренě хěрсем. Йěркене çирěп пâхăннă, ěçе вâхăтра çитнě, вâхâтра кайнă. Еçри âсталăх та ÿссе пынă.

Çапла типографи ěçченěсем пулса тăчěç Эренар хěрěсем. 26—27 çул пěр улшăнмасăр тимлеççě ку предприятире. Пěри тепринчен маттур.

Рина, акâ, нумай çул район хаçачěн страницисене калăплассине вăй хурать. Хâйне май âсталăхпа пултарулâх кирлě кунта. Хаçатâмăр вулакан патне мěнле сăнпа çитесси шăпах унран нумай килет. Çавна тěпе хурса ěçлет те Ровенна Кондратьевна Капарова. Редакци макетне пăхăнса, материала, сăн ÿкерчěке килěшÿллě вырнаçтарать. Кашни полоса хăйне май илемлě пултăр тесе тимлет вăл. Кунта, паллах, кашни линейки, пробел материалě вырăнта пулни пысăк пěлтерěшлě. Материалсен ячěсене шрифтсене пěлсе суйласа илсе маçтăрлать. Пěр сăмахпа: чăн-чăн полиграфи ěçченě.

«Ленин çулěпе» («Пурнăç çулěпе») республикăри районсенчи хаçатсен смотр-конкурсěсенче нихăçан та хурламан. Содержани, сăн-сăначě енчен темиçе хутчен те пысăк хак панă. Çапла республикăри âмăртура икě хутчен иккěмěш, виççěмěш вырăна тухăччě. Çакăнта, паллах, Ровенна Капарова верстальщица тÿпи те пěчěк мар.

Ěçне кура хисепě. Типографи цехěнче чěрěк ěмěр ытла ěçлесе ырă ят çěнсе илчě Ровенна Кондратьевна. Ăна Раççей Пичет Комитечěн Хисеп грамотине парса чыс тунă.

# Ĕçре тупнă телей



Телей сывлâшра вĕçмест, ăна ĕçре тупма хушнă авалхи ватâсем. Кам нумайччен шырать хâй кâмăлне каяканнине. Тепри тӳрех, çамрăклах тупать çавна. Акă типографи ĕçченне Зинаида Семеновăна илер. 26 çул тâрâшать вăл хâй ĕçĕнче. Улăштарас шухâшĕ асра та пулман. «Хаçат пичетлеме вĕренсен, нихâçан та пăрахмâттăм çак ĕçе...» шухăшланă ун чух тин çеç парта хушшинчен тухнâ вунçиччĕри хĕр. Çапла пулнă та.

Çâмăлах килмен малтанлăха. Икĕ-виçĕ уйâх вĕреннĕ хыççăн хâватлă машинâсем умне хâй тĕллĕнех тâрать вăл.

— Килсенех ĕçпе, çыннисемпе паллаштарчĕç. Наставница Рина Капарова пулчĕ. Вăл та манран виçĕ уйâх маларах çеç тытăннăччĕ ĕçлеме. Тантăшсем пулнâ май хâнâхма çâмâлрах та пулчĕ. Пĕлменни нумай-çке. Тâтă-

шах иккĕленетĕп тата. Аслисене пĕрмаях чăрмантармâ аван та мар. Пĕррехинче çапла, вĕренекен шутĕнчен тухсан ĕнтĕ, пĕчченех тâратса хâварчĕç мана пичет машини умне. Хам хăратâп, çитменнине хаçат тиражĕ 5—6 пинтен иртет. Алăсем хăвâртлâха хăнâхман, бракĕ пулать. Ирччен çапрăм хаçата. Пĕчĕккĕн ала ларма пуçларĕ вара,— аса илет пуçламăш çулсем пирки Зинаида Григорьевна.

Халĕ вăл кунти пур ĕçе те пилĕк пӳрне пек пĕлет. Печатница, наборщица та вâл. Ара, коллективра çапла йĕрке, пĕри ерçеймест — хушмасâрах ун ĕçне тепри пурнâçлать. Çавâнпах пулĕ тепĕр чух типографи директорĕ Ф. Ф. Константинова вĕсем пирки «пирĕн хĕрсем» тет. Администраци хâй те йыша пĕтĕçтерес, пĕр-пĕрин хушшинче хисеп-чыс пултăр тесе тâрâшмасть мар. Çулленех пуриншĕн те усâллă кану кунĕсем йĕркелет. Ĕçлекенĕн паллâ кунĕсене астуса, ăна коллективра саламламасâр хâвармасть. Çавăнпах пуль кашнин ĕç стажĕ 20—30 çул таранах. Сана ăпланаççĕ, ĕçшĕн чысласçĕ пулсан епле парăмра юлăн эсĕ. Пĕлменнине вĕренме, пулманнине çĕнтерме тâрâшатâп ку чухне.

Ыттисем пекех район тата республика шайĕнчи хисепе тивĕçнĕ З. Семенова. Икĕ хут социализмла ĕç ударникĕ, 11-мĕш пилĕкçуллâхâн ударникĕ ята тивĕçнĕ. 1997 çулта РФ Пичет комитечĕн Хисеп грамотипе наградâланâ ăна.

# Пичетре-и, чăн ăста



Пичетлекен машинăсен шавĕ. Куллен илтетĕн âна типографире. Унсăр епле пултâр-ха? Район хаçачĕн вулакан патне вâхâтра çитмеллех. Çакâнта çуралать-çке вăл. Еç конвейерĕн кăтартâвĕ шâпах пичетре курâнать.

Еç кунĕ вĕçленнĕ тĕле хаçат полосисене (страницисене) хатĕрлесе çитереççĕ те пичетлекен машинâсене вырнаçтараççĕ. Пĕринче — пĕрремĕшпе тăваттâмĕш, теприпче иккĕмĕшпе виççĕмĕш полосасем. Çапла вара печатницăн типографири юлташĕсенчен каярах юлса е иртерех килсе ĕçлеме тивет. Хâйĕн ирĕкĕ теме юрать. Епле меллĕрех, çапла ĕçлет вăл. Районти çыхâну узелĕнчен автомашина килсе çитнĕ çĕре хаçат пултâр çеç. Печатницâ-

сене вара ку енĕпе вĕрентеймĕн. Вĕсем хăйсен ĕç графикĕпе килĕшӳллĕ ĕçлеççĕ, хаçата яланах вăхăтра пичетлесе хатĕрлеççĕ.

Камсем-ха вĕсем — пичет ĕçченĕсем? Зоя Андреева, Зинаида Семенова, Валентина Матвеева тăрâшаççĕ ку ответлâ ĕçре. Пĕр-пĕринпе черетленсе ĕçлеççĕ вĕсем. Хâйсем хушшинче тата çакâн пек йĕрке тунâ: ылмашâнса эрнешер ĕçлеççĕ.

Виççĕшĕ те пичет ĕçĕнче пуян опытлă, мĕншĕн тесен кашниех типографире нумай çул пĕр улшăнмасâр тимлет.

Асамат хĕрĕ Зоя Иванова, (халĕ Андреева, Тукач ялне качча тухнă), сăмахран, Элĕкри вâтам шкултан 1969 çулта вĕренсе тухнâ хыççăнах типографие пырса кĕнĕ. Нумай çул вâй-хала шеллемесĕр ĕçлесе, кунти пур ĕçсемпе те çывâх туслашрĕ Зоя Ивановна. Набор тумалла-и, хаçат калăпламалла-и — пур енĕпе те чăн ăста. Е тата хаçат е ĕç хучĕ пичетлет. Çапâнса пултăр темест вâл. Машинâна чарса, пахалâха миçе хут тĕрĕслемест-ши? Пичет уçăмлâ, пурте килĕшӳллĕ чухне вара хавхаланăвĕ те ӳсет. «Ялан çапла âнăçлă ĕçлесчĕ», тет хисеплĕ ĕç ветеранĕ Зоя Ивановна Андреева.

# Маттур пирĕн Роза



Линотип, тетпĕр типографири наборлакан машинăна. Паянхи куна илсен, иккĕ вĕсем цехра. Тӳрех палăртар: хăйне май интереслĕ те кăткăс техника. Ăна ĕçлеттерме âслâ-тâплâ арçын кирлĕ темелле пек.

Анчах кунти линотипсем хĕрарâмсенех лайâх «итлеç-çĕ» çав. Пăхатâн та тĕлĕнетĕн: епле маттур вĕсем. Ку-сем — пичет ĕçĕн ветеранĕ, типографире чĕрĕк ĕмĕр ытла вâй хуракан Елизавета Ананьева тата Роза Гаври-лова.

С. Тимофеев фотокорреспондент Р. Гавриловăна шă-пах ĕç вырâнĕнче ӳкерсе илнĕ. Епле вâр-вар та çаврăнâ-çуллă вăл. Умĕнчи «тӳмесем» çийĕн пӳрнисем хăвăрт-

хăвâрт чупаççĕ те самантрах строка хыççâн строка татти-сыпписĕр шâранса тухаççĕ.

Чâн-чâн типографи хĕрĕ пулма çуралнâ тейĕн Роза Изосимовнâна. Вăл кӳршĕри Муркаш районĕнчи Йӳтĕркасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вâтам шкул ăнăçлâ пĕтернĕ те Шупашкарти полиграфистсен профтехучилищине вĕренме кĕнĕ. Икĕ çул пĕлӳ илсе, наборщица профессине алла илнĕ вăл. Хĕр училищâна лайâх паллăсемпе пĕтернĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна ĕçлеме Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ типографине хăварнă. Хастар хĕр ĕçе часах хăнâхнă. Çапла икĕ çул вăй хунâ кунта.

Мĕнех тâвâн шăпа хулара юлма пӳрмен пулсан. Роза хамăр районти Кĕçĕн Тâван каччине Виталие качча килнĕ. Вăр-варскере кунта тӳрех асăрханâ. Вăтам шкула ĕçлеме илнĕ. Тâватâ çул пионервожатăйра вăй хунă Роза. Анчах унâн хăй профессийĕпех ĕçлес килнĕ. Телее вара ĕçĕ район типографийĕнче тупăннă та. Халĕ, акâ, çиччĕмĕш çул типографире тимлет Роза Изосимовна. Йышрачи çамрăкки. Ĕçĕ-хĕлĕпе вара тиркеймĕн. Хâвâрт та пахалâхлâ ĕçлет. Вăл наборланâ материалсенче йăнăшсем питех кураймăн. Ку вара линотипистка ĕçĕнче чи кирли. Ырă кăмâлĕпе сâпайлâхĕшĕн те хисеплеççĕ âна типографипе редакцире.

Çавâн пекех район типографийĕнче Ехремкассинче çуралса ӳснĕ Зоя Александровна Орлова (халĕ Петрова) линотипистка чылай хушâ ĕçленине палăртмалла. Кунта вâл 1970 çулсен варринчен тытăнса 1980 çулсен варриччен вăй хунâ. Коллективра âна паян кун та ĕçчен те вăр-вар пулнипе асăнаççĕ.

# Асамлăх та ку ĕçре



Кĕрлет те кĕрлет пичет машини. Темшĕн-çке вâл мана сарă тулă пуссинчи комбайна аса илтерет. Кâлтăр-кâлтăр... илтĕнсе тâрать сасси. Машина умĕнче тâракан хĕрарăм çеç шăп тăрать. Никама та, ниме те асâрхамасть вăл. Унăн пĕтĕм тимлĕхĕ шур хута пĕрерĕн-пĕрерĕн валик патне типтерлĕн куçарса хурасси. Хушâран, машинâна чарса, хыçалта купаланакан хаçата тĕсесе пâхкалать. Ытла та ансат темелле хаçат пичетлеме. Анчах продукцие хатĕрличченхи процеса тарâнпâн тишкерсен вара, тин çеç пуçласа куракансâн ĕмĕрне те хâнăхассăн туйăнмасть. Типографи хĕрĕсем вара ку енĕпе чăн профессионалсемех ĕнтĕ. Акâ. илер-ха Валя Матвеевâна, пĕр-пĕр техника е япала пирки ку чухне универсал теççĕ те, ун пирки епле калам-ши? Уншăн кунти линотипистка, **наборщица, печатница ĕçĕ — нихâшĕ те ют мар.**

Шкул партти хушшинчен тин çеç тухнâ çамрăк умĕнче аплă çул — кâмâл âçта туртать, чун мĕн ыйтать — ирĕкӳ хăвăн, вĕрен, ĕçле, малалла ăнтâл çеç. Паллах, ку чухне аслисен сĕнĕвĕ те паха. Вальăна, акâ, Элĕкри типографире ĕçлекен З. Андреевăн сĕнĕвĕ интереслентерсе янă. Çапла âнсâртран панâ сĕнӳ хĕрĕн малашнехи пурнăçне татса панă та. Тукач хĕрĕ куллен Элĕк еннелле утма тытăнать. Йышра çамрăккиччĕ вâл. Пурте интереслĕ кунта уншâн.

Унтанпа 17 çул иртрĕ ĕнтĕ. Хâй ĕçне килĕштерсех, чун туртнипех туса пырать В. Матвеева. Интересĕ сӳнмен, вâл иксĕлми.

# ТИПОГРАФИ РУКОВОДИТЕЛЁСЕМ

| Хушаматсем | | Ӗҫленӗ ҫулсем | | Хӑш ялсем |
|---|---|---|---|---|
| Зубровский | Н. | 1933—1935 | — директор | Качалав |
| Меценатова | П. С. | 1936—1937 | — редактор | Чурачӑк |
| Золотов | Т. Я. | 1937—5 уйӑх | —»— | Синер |
| Краснов | И. С. | 1937—1939 | — директор | |
| Константинов | В. П. | 1939—2 уйӑх | —»— | |
| Тихонов | И. Т. | 1939—3 уйӑх∅1947—1951 | | Тавӑт |
| Аверкиев | Е. А. | 1939—1940 — 6 уйӑх | | Ехремкасси |
| Козлов | Н. А. | 1940—7 уйӑх | — бухгалтер | Качалав |
| Ванин | Ф. Е. | 1940—1941—4 уйӑх | | Шӑлан |
| Саперкин | С. Ф. | 1940—1944 | — редактор | Урикасси |
| Лисин | Х. И. | 1944—1947 | —»— | Ехремкасси |
| Мешков | А. Н. | 1951—1953 | —»— | Вутлан |
| Андреева | В. А. | 1953—1955 | — мастер | Тимӗрҫкасси |
| Емельянов | А. Е. | 1955—1956 | —»— | Ехремкасси |
| Афанасьева | Ю. А. | 1956—1958 | —»— | Вӑрманкас |
| Удяков | М. Е. | 1956—1957 | —»— | Шуркасси |
| Васильев | К. В. | 1957—1958 | —»— | Хирлеппуҫ |
| Иванов | М. И. | 1958—1959 | —»— | Хирлеппуҫ |
| Григорьев | Е. Г. | 1959—1960 | —»— | СП-Шӗмшеш |
| Чернова | В. Я. | 1960—1962 | — бригадир | Вутлан |
| Яковлев | П. Я. | 1962—уйӑх | —»— | Актай |
| Сергеев | Н. С. | 1965—1966 | — мастер | Мӑн Вылӑ |
| Андреев | Ю. А. | 1966—уйӑх | —»— | Элӗк |
| Кузьмина | Т. К. | 1966—5 уйӑх | —»— | Урмай |
| Орлова | Р. А. | 1966—1968 | —»— | Ехремкасси |
| Михайлова | С. М. | 1968—1969 | — бригадир | Йӑлкӑш |
| Серафимова | Н. С. | 1969—2 уйӑх | —»— | Торпкасси |
| Смелов | К. С. | 1969—1970 | —»— | Тени |
| Митрофанова | Р. М. | 1970—2 уйӑх | —»— | Торпкасси |
| Петров | А. И. | 1970—1971—8 уйӑх | —»— | Янкурас |
| Иванова | Н. Е. | 1971—2 уйӑх | —» | Янкурас |
| Капарова | Т. Т. | 1971 | —»— | Эренар |
| Ефимова | П. П. | 1972 | —»— | Асамат |
| Кустиков | А. Г. | 1973—1984 | — редактор | Хирлеппуҫ |
| Федорова | Л. | 1984—1986 | — мастер | Етӗрне р-нӗ |
| Константинова | Ф. Ф. | 1986—1992 | — мастер | Хурӑнсур |
| | | 1993 ҫултан | — директор | |

# РАЙОН ХАÇАЧĔН РЕДАКТОРĔСЕМ

| Хушаматсем | | Еçленĕ çулсем | Хăш ялсем |
|---|---|---|---|
| Золотов | Т. Я. | 1932 | Синер |
| Степанов | А. С. | 1933 | Пиçенер |
| Меценатова | П. С. | 1933—1937 | Чурачăк |
| Куравлев | В. П. | 1937—1938 | Кĕçĕн Ямаш |
| Тихонов | И. Т. | 1938—1940∅1947—1951 | Таваҫ |
| Саперкин | С. Ф. | 1940—1944 | Урикасси |
| Лисин | Х. И. | 1944—1947 | Ехремкасси |
| Мешков | А. Н. | 1951—1955∅1957—1958 | Вутлан |
| Петров | И, П. | 1955—1956 | Чардак |
| Чирков | И. А. | 1956—1957 | Хĕрлĕ Чутай |
| Соловьев | П. Н. | 1961—1962 | Актай |
| Кустиков | А. Г. | 1958—1961∅1965—1986 | Хирлеппуç |
| Владимиров | Л. М. | 1986—1993 | Кĕçĕн Тăван |
| Степанов | В. Ф. | 1994—1996 | Мăн Тукташ |
| Тимофеева | Е. С. | 1996—1998 | Изванка |
| Корнилов | Ю. Л. | 1998-мĕш çултанпа | Вутлан |

Юнашар утатпăр çулсерен,
Çĕннине ыратпăр кунсерен.
Пĕлтерсе тăратпăр хыпарсем,
Халь вара яратпăр йыхравсем.

Печатаем газету через день,
Жителям района своего.
Будет скоро полиграфистов день,
Отметим дружно и мы его.

*Геннадий САВЕЛЬЕВ.*

# ТУПМАЛЛИ:


| | |
|---|---|
| **Умсăмах** | 3 |
| **Часах çитетпĕр утмăла** | 5 |
| **Мухтавлă хаçатăмăр** | 9 |
| **Йывăрлăхра вăй илнĕ** | 13 |
| **Юратнă ĕç — чун уççи** | 10 |
| **Утатпăр пурнăç çулĕпе** | 21 |
| *1. Уездсем вырăнне — районсем* | *21* |
| *2. Хаçатсем, журналсем* | *22* |
| *3. Редакципе типографи çурчĕсем* | *25* |
| *4. Литсотрудниксем* | *28* |
| *5. Ялкорсем* | *34* |
| *6. Полиграфистсем* | *37* |



**Геннадий Александрович САВЕЛЬЕВ**

## ШАГАЕМ ПО ЖИЗНЕННОМУ ПУТИ

Документально-исторический очерк
на чувашском языке

---

Редактор **М. Г. Кустиков**
Корректор **В. Г. Павлов**

---

Сдано в набор 15.10.98. Подписано к печати 2.11.98. Формат 1/16. Усл. печат. лист 3.5 Печать высокая. Бумага писчая. Заказ 564. Тираж 300.

Аликовская районная типография
Государственного комитета Чувашской Республики
по печати
429230; с, Аликово, ул. Советская-35.

Аликовская районная типография
Государственного комитета Чувашской Республики
по печати
429250, с. Аликово, ул. Советская 35.

5/IV/6.